чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ШĂМАТ КУН
2014, нарăс /февраль/
22

33-34 /26439-26440/ № №   Хакĕ ирĕклĕ   WWW.hypar.ru

## Хаклă ентешĕмĕрсем!

**Сире Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!**

Паллă çак уяв кунĕнче эпир хамăрăн аслă патшалăхăмăрăн тăнăçлăхне сыхлакан, унăн чиккисене хапсăнуçăсенчен шанчăклăн хураллакан хӳтĕлевçĕсене чыслатпăр.

Тăван çĕр-шыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварассишĕн тăшманпа калама çук паттăррăн тата хăюллăн çапăçса пуç хунисене пурне те чун ыратăвĕпе аса илетпĕр. Вĕсем ĕмĕр-ĕмĕрех асра упранĕç!

Паян Хĕç-пăшаллă Вăйсенче хĕсметре тăракан Раççей çыннисен çĕнĕ ăрăвĕ мăн аслашшĕсен мухтавлă йăлисене чыслăн малалла тытса пырать.

Çĕр-шывăн оборона пултарулăхне çирĕплетес ĕçре çамрăксене патриотлăх туйăмсене ăша хывма, Тăван çĕр-шывăмăрăн историлле аваллăхне хисеплеме, йывăр вăхăтра ăна хӳтĕлеме хатĕр пулма вĕрентсе ӳстерни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чăваш Республикинче çак ĕç çине уйрăмах тимлĕ пăхаççĕ, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсем тата Афганистан Республикинчи çапăçусене хутшăннисем çамрăксемпе тĕл пулсах тăраççĕ, шкул ачисем валли «Зарница» тата «Орленок» çар-спорт вăййисем тăтăшах иртеççĕ, пирĕн яшсемпе хĕрсем Атăлçи федераци округĕн территорийĕнче пурнăçланакан патриотла тĕллевлĕ проектсене яланах хастар хутшăнаççĕ.

Чăваш Ен çамрăксене çарпа патриот воспитанийĕ парас енĕпе тунă çитĕнӳсене федераци наградипе – РФ оборона министрĕн çар учетне чи лайăх йĕркеленине тупса палăртма ирттерекен смотр-конкурсра мала тухнăшăн паракан вымпелĕпе чысланă.

Çирĕп чунлăх тата аслă Раççее пĕтĕм кăмăлтан юратни унăн хăватлăхне тата хăрушсăрлăхне ӳстерес енĕпе тăвакан ĕçре çĕнĕ ăнăçусемпе çитĕнӳсен никĕсĕ пулса тăччăр!

Сире улăпла сывлăх, чун çирĕплĕхĕ, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.В.ИГНАТЬЕВ.**

## Чăваш Енĕн хисеплĕ çыннисем!

Сире Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕпе саламлатпăр! Пирĕнтен кашниех – хăйĕн çемйин, хăйĕн килçурчĕн, чуншăн хаклă тăван кĕтесçĕрĕн хӳтĕлевçи. Паллă çак кун – тăван патшалăхăмăра ырă туйăмпа юратакан, уншăн пăшăрханакан, хăйĕн çывăх çыннисемпе Тăван çĕр-шывăн паттăр ĕç тума хатĕр çынсен уявĕ.

Вăрçă тата ĕçĕн хисеплĕ ветеранĕсене, çĕр-шыв ирĕклĕхĕпе унăн никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçнă, тылра çĕнтерĕве туптанисене, халăх хуçалăхĕнче нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунисене уйрăм тав сăмахĕ калатпăр.

Çирĕп сывлăх, телей, пурлăхпа тăнăç пурнăç сунатпăр.

**«ЕДИНАЯ РОССИЯ» партин Чăваш регион уйрăмĕ.**

## Хисеплĕ арçынсем!

Сире "АККОНД" АУО коллективĕ тата эпĕ Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатпăр!

Ку уяв Раççей салтакĕсемпе офицерĕсен паттăрлăхĕн тата мухтава тивĕçлĕ ĕçĕсен ас тăвăмне упрать, вĕсем пирĕншĕн яланах хастарлăх, чăн-чăн хăюлăх тата тăван çĕре юратнин ырă тĕслĕхĕ пулса юлаççĕ.

Чăн-чăн арçын паян – вăл çарта-и е мирлĕ службăра тăрать-и – яланах çывăх çыннисен лăпкăлăхне сыхлать, Тăван çĕр-шыва шанчăклă хӳтлĕхпе тивĕçтерет.

Сире тата тăванăрсемпе çывăх çыннăрсене çирĕп сывлăх, телей, ырлăх, çутă шанăç тата мирлĕ тӳпе сунатпăр!

**В.ИВАНОВ,**
**"АККОНД" АУО генеральнăй директорĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ.**



# Вăрçă паттăрĕн А.Кочетов ентешĕмĕрĕн мăнукĕн хĕрĕ Аделина Сотникова – Олимп чемпионки!

● ➡ 16 стр.

# Кăçал та тĕнче шайĕнче иртрĕ

***Нарăс уйăхĕн 20-21-мĕшĕсенче Шупашкарти Николаев космонавт урамĕнчи ял хуçалăх пасарĕнче "Çĕр улми – 2014" курав ĕçлерĕ. Улттăмĕш хут йĕркеленĕ форум кăçал та тĕнче шайĕнче иртрĕ. Раççейĕн 17 регионĕпе пĕрле уява яланхи пекех Германи, АПШ, Голланди, Беларуç Республикин представителĕсем хутшăнчĕç. Çĕр улми туса илесси мĕн пур патшалăхшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине çирĕплетет ку.***

"Иккĕмĕш çăкăр" – тĕп апат-çимĕçрен пĕри, ăна 130 çĕр-шывра çитĕнтереççĕ. Çĕр çинче халăх йышĕ хушăнсах пынăран лаптăка çулсерен пысăклатаççĕ. Кашни гектар паракан тухăçпа шутласан унăн калăпăшĕ пĕрчĕллĕ культурăран 10 е ытларах та хут нумайрах. Планета халăха тăрантарайми пулас хăрушлăха сирмешкĕн ăсчахсем шăпах çĕр улмире çăлăнăç пуррине кураççĕ те.

Юлашки 16 çулта тĕнчере "иккĕмĕш çăкăр" туса илесси 275-рен 330 млн тоннăна çитнĕ. Раççей Китайпа Инди хыççăн виççĕмĕш вырăн йышăнать.

Курава Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев уçрĕ, вăл пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕ. "Ял хуçалăхĕнче çĕр улми туса илесси тупăшлă отрасль шутланать, – терĕ вăл. – Тăрăшуллă çĕр ĕçченĕ ку чухнехи пысăк эффективлă агротехнологие пурнăça кĕртсе продукци пахалăхне ӳстерет, яланах тупăш илет, лаптăксене çулленех хушăнтарать".

Республика Пуçлăхĕ Раççей ял хуçалăх академийĕн А.Г.Лорх ячĕллĕ çĕр улми хуçалăхĕн Пĕтĕм Раççейри ăслăлăх-тĕпчев институчĕн директорне



Сар.ru сайчĕн сăн ӳкерчĕкĕ

Евгений Симакова курава çулленех хутшăнма май тупнăшăн тав турĕ. Институт çĕр улми производствин технологине çĕнетсех пырать, лайăх тухăç паракан эффективлă çĕнĕ сортсем кăларать. Çакна потребительсем те хăнăхса çитрĕç ĕнтĕ, пасарта экологи енчен таса çимĕç çеç туянасшăн.

Михаил Игнатьев курав экспозицийĕпе паллашрĕ, павильонсен умĕнче чарăна-чарăна тăчĕ. Малта пыракан технологисене пурнăça хăюллăн кĕртекенсем, ӳсен-тăрана чир-чĕртен, сăтăрçăсенчен хӳтĕлекен тавар туса кăларакансем, паха вăрлăх çитĕнтерекенсем хăйсен таварĕпе паллаштаракан вырăнсене çитсе курчĕ. Михаил Васильевич çĕр улмирен кĕрекен тупăш кашни гектар çине куçарса шутласан пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши, çавăн пекех ытти культурăран та пысăкраххине палăртрĕ, çавăнпа çак отрасле малашне те çине тăрсах аталантармалла терĕ.

Конференц-залра "Çĕр улмин хальхи вăхăтри пĕлтерĕшĕ тата пуласлăхĕ" ятпа ăслăлăх-практика конференцийĕ иртрĕ. Малтан ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов тăван республикăра "иккĕмĕш çăкăр" туса илесси хăш шая çитнипе паллаштарчĕ, ăна ку чухне тухăçлă çитĕнтерме майсем пуррине хăш-пĕр тĕслĕхпе çирĕплетрĕ. Чăваш Ен территорийĕ пысăках мар пулин те ăна çĕр-шыври нумай регионран ытларах çитĕнтерет. 2012 çул уйрăмах ăнăçу кӳнĕ. Федерацин Атăлçи округĕнче Аçтăрхан облаçĕ хыççăн эпир 2-мĕш, Раççейри регионсен хушшинче 5-мĕш вырăн йышăннă. Кăтарту пĕлтĕр те çак шайран чакмастчĕ пулĕ, вăраха кайнă йĕпе-сапана пула пĕтĕмпех кăлараймарăмăр.

● ➡ 2 стр.

«Çавра сĕтел»

# Çамрăк педагогсем шкултан мĕншĕн шикленеççĕ?

***Республикăра вĕсене хатĕрлекен ятарлă аслă шкул пур. Унта квалификаци тĕлĕшĕнчен туллин тивĕçтерекен преподавательсем ĕçлеççĕ. Апла пулин те юлашки курса çитнĕ студентсенчен хăйсен малашнехи çул-йĕрне шкулпа çыхăнтарас шухăшлисем сахал. Сăлтавĕсем тĕрлĕрен: кама учителĕн ĕç укçи тивĕçтермест, хăшĕпĕри паянхи шкул ачисене «алла илеймесрен» хăрать, виççĕмĕшĕ…***

Республикăн ертÿлĕхне çивĕч çак ыйту пăшăрхантармасть пек-и? Апла мар çав, XXI ĕмĕрте çитĕнекен ăрăва пултаруллă, çивĕч ăслă, шухăшлавĕпе саманапа тан пыракан вĕрентекен питĕ кирлине тÿре-шара лайăх ăнланать. Çакна çирĕплетет те çак кунсенче И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, вĕренÿ министрĕ Владимир Иванов, Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Алексей Маклыгин хутшăннипе иртнĕ «çавра сĕтел». Хăйсен çитĕнĕвĕсемпе пăшăрхантаракан ыйтăвĕсем çинчен ертÿçĕсемпе куçакуçăн калаçма асăннă вузра вĕренекенсемпе выпускниксем пухăнчĕç. Паллах, педуниверситетăн вĕренÿ ĕçĕшĕн яваплисем те айккинче юлмарĕç.

Тĕл пулăвăн малтанхи пайĕнче Михаил Васильевич паян педагог профессийĕ тĕлĕшпе йĕркеленнĕ лару-тăрăва хак пачĕ. Унăн аталанăвĕнче уйрăм çитĕнÿсем пур, анчах хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕшĕн çивĕч ыйту уçах юлать-ха: кирлех-и педуниверситетра вĕренни? Çак ыйтăвăн пĕлтерĕшне республика ертÿçи нимĕнрен ытла ĕçе специальноçпа вырнаçас майсемпе çыхăнтарать.

– Пурте ас тăватпăр: иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче шкулта ĕçлекенсенчен хăшĕпĕри шалу пĕчĕккипе, ăна вăхăтра илейменнипе вĕрентекен ĕçне пăрахрĕ. Патшалăх вĕсене ун чухне пулăшу параймарĕ. Тивĕçлĕ квалификаци илнĕ кадрсене паян татах çухатас марччĕ пирĕн. Çав тĕллевпе патшалăх çамрăк вĕрентекенсене çăмăллăхсем парать. Чи курăмли – яла ĕçлеме каякана пурăнмалли кĕтес туянма субсиди /70 процент таран/ пани. Ку программăна лекейменнисемшĕн вара тавăрмалла мар пулăшу шайĕ – çурт-йĕр хакĕн 20 проценчĕ чухлĕ. Ĕçе тин пуçăнакан педагога 3 çул таран хушса тÿленине пĕлетĕр. Патшалăх шалу хăпартса пырассипе тимлĕхе чакармасть. Çакă йăлтах сирĕн вĕренÿ каçалăкĕн пуçламăшĕнчи йывăрлăхсене çăмăллатас тенипе пулакан ĕçсем, – алла кĕç-вĕç диплом илекен педагогсене шанăç пачĕç Пуçлăх сăмахĕсем.

Çакна асăнмалла: педуниверситетра аслă курсри яшсемпе хĕрсенчен хăшĕ-пĕри вĕренĕве ĕçпе çыхăнтарма тытăннă та. Пуçламăш утăмсем тăвакан учительсен хĕпĕртĕвĕ те, пăшăрханăвĕ те тупăнать. Акă Вера Терентьевăна, Элĕкри пуçламăш классен вĕрентекенне, ăста вĕрентÿçĕ кирлĕ канашсем вăхăтра парса шкул картине меллĕ вырнаçма пулăшать, Елена Юркинăна аслă классенче хăйсен тантăшĕ пек йышăнасшăн та – йĕркене пăхăнтарма йывăр. Анастасия Демидова, Шуршăл шкулĕнче географи вĕрентекенскер, сехет сахал пулнипе кăмăлсăр. Оксана Ильина Шупашкар районĕнчи Çĕньялти вăтам шкулта информаци технологийĕн хатĕрĕсем çителĕксĕрри пирки евитлерĕ.

Çамрăк педагогсен тата студентсен ыйтăвĕсене тÿресем еплерех татса пама сĕнни çинчен çитес вăхăтра тухакан «Вĕренÿ» ятарлă страницăра çырса кăтартăпăр.

■ **Ирина ПУШКИНА**

# Кăçал та тĕнче шайĕнче иртрĕ

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.**

Çулпа çул пĕр килмест теççĕ. Хресченсем кăçал çанталăк хăйсене майлă пуласса шанаççĕ. Çавăнпа халăхра анлă сарăлнă культурăн лаптăкне чакарас шухăшлă мар. Шел, вăрлăх çитменни ура хурать. Чылай хуçалăх ăна республика тулашĕнчен туянасшăн. Форум вĕсене хăнасемпе килĕшÿсем тума май пачĕ.

Евгений Симаков çĕр улмине хăй вăхăтĕнче Раççейре епле çитĕнтерме тытăнни çинчен каласа кăтартрĕ. Çынсем малтанах унпа усă курма пĕлмен. Чечек «çырлисене» çисе наркăмăшланнă тĕслĕх пайтах пулнă. Унччен халăх тутлă кăшман /брюкха/ çинĕ. «Пирĕн тивĕç – халăх сывлăхĕшĕн тăрăшасси, – терĕ Евгений Алексеевич. – Çавăнпа селекци енĕпе çине тăрсах ĕçлемелле, паха сортсем кăлармалла, тирпейлекен промышленноçа аталантармалла».

Константин Пшеченков профессор Мускав облаçĕнчи «Озеры» ООО аталанăвĕпе паллаштарнă май çуса сутакан çĕр улмин кашни килограмĕ çуманнинчен хуçалăха 18-20 тенкĕ таса тупăш панине çирĕплетрĕ. Раççей тĕп хулинчи чылай лавкка таса маррине пачах та йышăнмасть иккен. Халăх пысăк хака пăхмасăрах тасине çеç туянать.

Уява пухăннисем ăсталăх класĕсемпе «çавра сĕтелсенче» пĕр-пĕрин опычĕпе паллашрĕç, çĕнĕ пĕлÿпе пуянланчĕç.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

## Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕнчи 23-мĕш хушăвĕпе килĕшÿллĕн ĕçри çитĕнÿсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Шупашкар хулинчи «Спорт вăййисен хатĕрĕсен завочĕ» акционерсен хупă обществин электрогазосварщикне **Владимир Иванович ЗАХАРОВА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградăланă;

сывлăх сыхлавĕн тытăмĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Чăваш Республикин «Васкавлă медицина пулăшăвĕн больници» бюджет учрежденийĕн янахпа пит хирургне, медицина наукисен кандидатне **Вячеслав Витальевич ДАНИЛОВА,** Чăваш Республикин «Республикăри ача-пăча клиника больници» бюджет учрежденийĕн врачне – анестезиолог-реаниматологне, медицина наукисен кандидатне **Олег Николаевич ИВАНОВА,** Шупашкар хулинчи Чăваш Республикин «Хулари клиника 1-мĕш больници» бюджет учрежденийĕн уйрăм заведующине – врач-эндоскопистне **Леонид Леонидович СПИРИДОНОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ВРАЧĔ»;**

культура тытăмĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата пултарулăхри нумай çулхи ĕç-хĕлшĕн «Янра, юрă» фольклорпа эстрада ансамблĕн солистне **Виталий Иванович АДЮКОВА,** Çĕнĕ Шупашкар хулинчи ачасене хушма пĕлÿ паракан «Ачасен искусство шкулĕ» муниципалитетăн бюджет вĕренÿ учрежденийĕн преподавательне **Ирина Валерьевна АНДРБАЕВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»;**

промышленноç тытăмĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Шупашкар хулинчи «Бреслер» тĕпчев центрĕ» тулли мар яваплă обществăн ĕç тăвакан директорне **Андрей Алексеевич ПЕТРОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»;**

халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕн пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх ыйтăвĕсемпе ĕçлекен çумне – Шупашкар хула администрацийĕн пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх, энергетика, транспорт тата çыхăну управленийĕн пуçлăхне **Герман Геннадиевич АЛЕКСАНДРОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХАЛĂХĂН ЙĂЛА ЫЙТĂВĔСЕНЕ ТИВĔÇТЕРЕССИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»;**

педагогика тата воспитани парас енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Етĕрне районĕнчи муниципалитетăн «Мăн Чурашри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вăтам шкул» пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан бюджет учрежденийĕн вĕрентекенне **Николай Георгиевич РАХКОШКИНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ УЧИТЕЛĔ»;**

граждансемпе юридици сăпачĕсен прависемпе саккунлă интересĕсене хÿтĕлес енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Шупашкар хулинчи Адвокатсен «ЗАЩИТА» коллегийĕн председательне, адвоката **Вера Васильевна БОЛЬШОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ЮРИСЧĔ»** хисеплĕ ят панă.

*Ĕç тата çын*

# Вăхăт çĕнĕ меслетсем сĕнет

***«Эпир 12 тĕрлĕ административлă регламента пăхăнса ĕçлетпĕр, çынсене тĕрлĕ енлĕ пулăшу кÿретпĕр. Çав шутра – общество ĕçĕсем, профвĕренÿ учрежденине пĕтернĕ 18-20 çулсенчи çамрăксене пĕрремĕш ĕç вырăнĕ тупса парасси, ĕç шыранă чухне йывăрлăхсемпе тĕл пулакан гражданселе хÿтлĕхпе тивĕçтересси, çынсене хăйсен бизнесне уçма е çĕнĕ професси илме пулăшасси, пенсие вăхăтран маларах ярасси т.ыт.те. Унсăр пуçне вăхăт çĕнĕ меслетсем сĕнет, эпир вĕсемпе те усă куратпăр, пурнăç таппипе тан пыратпăр», – каласа кăтартать Елчĕк районĕнчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр директорĕ Марина Васильева.***



*● С.Федорова.*

Центрăн ĕç меслечĕсенчен пĕри вăл – вакансисен ярмăркки. Эпир Елчĕкри учреждение пулнă кун унта шăпах ярмăркка ирттертĕмĕр, çавна май çын йышлăччĕ: предприяти-организаци ертÿçисем квалификациллĕ кадрсене шыраса, ĕççĕррисем вара хăйсене килĕшекен ĕç тупас тĕллевпе килнĕ. Марина Васильева кун пек мероприятисен /вĕсене çулталăкне 7-8 хут ирттереççĕ/ усси пысăккине палăртрĕ: ĕç паракансемпе ăна шыракансем куçакуçăн тĕл пулса калаçаççĕ-çке. Нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче йĕркеленĕ вакансисен ярмăркки те ăнăçлă пулчĕ: ун чухне 2 çын – вăхăтлăх, 10-шĕ вара яланлăх ĕçе вырнаçма пултарчĕç.

Республикăн тĕллевлĕ программипе килĕшÿллĕн центрăн кăçал 4 сусăра тата нумай ачаллă 2 ашшĕ-амăшне ĕç тупса памалла. Пĕр инвалид ятарлă хатĕрсемпе пуянлатнă ĕç вырăнĕнче вăй хурать ĕнтĕ, ыттисене те çитес 2-3 уйăхра вырнаçтарма палăртаççĕ. «Чăваш Республикинче инвалидсем валли ĕç вырăнĕсем квоталасси çинчен» саккунăн 2 тата 4 статйисене кĕртнĕ улшăнусене тĕпе хурса Елчĕк районĕнчи тепĕр 7 организаци сусăрсем валли квота уйăрмалла, ыттисенче вара ку йĕрке пурнăçланса пырать. Учреждени районти инвалидсен обществипе тачă çыхăну йĕркеленĕ. Шăпах çав пĕрлĕх ĕçлес кăмăллă пур çынсене – хавшакрах сывлăхлисене – центра ярать, специалистсем вара сусăрăн реабилитаци карточкине тĕпе хурса ун валли юрăхлă ĕç шыраççĕ.

Халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр çамрăксене – хăйсен професси пурнăçĕнче пĕрремĕш утăмсем тăваканскерсене те – пулăшма тăрăшать. Ведомствăн 2012-2020 çулсем валли йышăннă программипе килĕшÿллĕн кăçал пуçламăш тата вăтам профвĕренÿ учрежденине тин пĕтернĕ 18-20 çулсенчи 2 çамрăка ĕçе вырнаçтармалла. Кăрлач уйăхĕнче ку енĕпе Татьяна Теплова предпринимательпе килĕшÿ тунă, çапла вара «Мечта» кафере Светлана Федорова, Шупашкарти пĕр техникумран повар-кондитера вĕренсе тухнăскер, ĕçлеме пуçланă. 19-ти Светлана, поварта тăрăшаканскер, хăйĕн ĕç вырăнĕпе те, коллективпа та кăмăллă. «Центрта питĕ хăвăрт ĕç тупса пачĕç, тавах вĕсене», – савăнăçне пытармасть С.Федорова.

Хăйĕн ĕçне пуçарса ярас текенсене те тĕрев кÿрет центр. Пĕлтĕр ĕççĕр 3 çын патшалăх пулăшăвĕпе бизнес йĕркеленĕ, кăçал тепĕр 3-ĕн проект хатĕрлеççĕ. «Маларах хăйĕн бизнесне уçнисем паян та йĕркеллех ĕçлесе пыни савăнтарать пире. Акă Валериан Иноходов ĕç вырăнĕсĕр юлсан пирĕн пата килчĕ. Проект хатĕрлесе ăна ăнăçлă хÿтĕлерĕ, ял çыннисене питĕ кирлĕ ĕç пуçарса ячĕ: кăркка, цесарка, индокăвакал чĕпписене инкубаторта кăларса сутма /вĕсене туянас текен йышлă/ тата усрама пуçларĕ. Пирĕн патра шутра тăракан тепĕр çынна хăйĕн патне ĕçлеме илчĕ», – каласа тăсать Марина Геннадьевна. В.Иноходов хăй çак çула суйласа илнĕшĕн кăмăллине пĕлтерчĕ. Ĕмĕтне пурнăçа кĕртме пулăшнăшăн центр ертÿçипе специалисчĕсене чĕререн тав турĕ.

Халăха хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ, патшалăх пулăшăвĕ тата программисем пирки информаципе ытларах тивĕçтерес тĕллевпе центр пĕлтĕртенпе вырăна тухса консультацисем парать. Çакнашкал мероприятисене Пенси фончĕпе, халăха социаллă хÿтлĕх паракан органсемпе пĕрле йĕркелеççĕ. Специалистсем çынсене хăйсен ĕç меслечĕсем пирки каласа кăтартаççĕ, пулăшу кÿреççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ. Пĕлтĕр центр çакнашкал 10 йышăну ирттернĕ, кăçал вара кашни уйăхра икĕ хут ялсене кайса тĕл пулу йĕркелесшĕн.

Çапла, Елчĕк районĕнчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центра вăй хуракансем хăйсен тивĕçĕсене тăрăшса пурнăçлаççĕ, ахальтен мар ĕççĕрлĕх шайĕ кăçалхи нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне 0,33% таннлашнă. Ку – республикăри лайăх кăтартусенчен пĕри.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

Госслужба занятости Чувашии

# Раççейре – кăтартулли

***Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин коллегийĕн нарăс уйăхĕн 18-мĕшĕнче иртнĕ анлă ларăвне унăн членĕсем, асăннă службăн структура подразделенийĕсен ертÿçисем, район-хулари ĕçпе тивĕçтерекен центрсен пуçлăхĕсем, «Аспект» вĕренÿпе методика центрĕн, «Нива» вĕренÿпе курс комбиначĕн, «Промтрактор», «Акконд», «Шупашкарти агрегат завочĕ» АУОсен, «Элара» наука-производство комплексĕн персонал ыйтăвĕсемпе ĕçлекен директорĕсем, «Пĕтĕм Раççейри инвалидсен обществин регион уйрăмĕн председателĕ хутшăнчĕç.***

Ларăва Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин ертÿçĕ Сергей Димитриев уçрĕ.

Тĕп докладпа – «Чăваш Республикин 2012-2020 çулсем валли çирĕплетнĕ «Халăха ĕçпе тивĕçтересси» патшалăх программине 2013 çулта пурнăçланин итогĕсемпе тата халăха ĕçпе тивĕçтермелли мероприятисене 2014 çулта пурнăçлассипе çыхăннă тĕллевсемпе – асăннă служба ертÿçин çумĕ Наталья Тараканова тухса каласрĕ.

Наталья Евгеньевна палăртнă тăрăх – халăха ĕçпе тивĕçтерес тытăмри лару-тăрăва республика экономикин чăн-чăн секторĕ мĕнлерех аталанни витĕм кÿрет. Пĕлтĕр строительствăра, пурăнмалли çуртсене хута ярас енĕпе, ваккăн сутакан тавар çаврăнăшĕнче, çынсене тивĕçтерекен тÿлевлĕ пулăшура, ĕçшĕн тÿлессинче, халăхăн укçа тупăшĕнче ÿсĕмсем пулнă. Çав вăхăтрах промышленноç тата ял хуçалăх производствисенче 2012 çулхи шая çитеймен. Туса кăларнă продукцие рынокра ыйтакансем йышланасса кĕтсе предприятисем ĕçлекенсен йышне сыхласа хăварма тăрăшнă. ЧР Экономика министерствин кăтартăвĕсем тăрăх – иртнĕ çул промышленноç комплексĕнче вăй хуракансен йышĕ 2 процент чакнă. Уйрăм отрасльте, тĕслĕхрен, строительство материалĕсен производствинче – 10,2 процент, йывăç тата унран тĕрлĕ япала тунă çĕрте – 6,1, резина тата пластмасса хатĕрсен производствинче 2,5 процент ÿснĕ, целлюлозăпа хут, машинăпа оборудовани тата электрооборудовани производствисенче 2012 çулхи шайрах юлнă.

Ĕç рынокĕн лару-тăрăвĕн эрнесерен иртнĕ мониторингĕн кăтартăвĕсемпе иртнĕ çул тулли мар сменăпа ĕçлекенсен хисепĕ республикăри организацисенче 2 хут сахаллаланнă, раштав вĕçĕнче 1510 çынпа танлашнă. Организацие хупнипе е йыша /штата/ чакарнипе 2459 çынна кăларса янă /2012 çулхинчен 450 çын е 15,5 процент сахалрах/. Вĕсенчен 1005-шĕ /40,9 процент/ ĕçлев службине пынă, 654-шне ĕçсĕр тесе йышăннă, Граждансене йышлăн кăларса янă муниципалитет йĕркеленĕвĕсенчи ĕç рынокĕн лару-тăрăвне кăткăслатас мар тесе центр специалисчĕсем предприяти-организацие çитсе консультаци панă, ваканси ярмăркки иртнерĕ, ĕçсĕрсене йышăннă, Чăваш Республикин 2012-2020 çулсем валли çирĕплетнĕ «Халăха ĕçпе тивĕçтересси» патшалăх программин мероприятийĕсене пурнăçланă.

Патшалăх программин мероприятийĕсене пурнăçлама пĕлтĕр 439,7 млн тенкĕ хывнă /федераци бюджетĕнчен – 207,7 млн, республикăннинчен – 232,0 млн/. Кăçал ку кăтарту 465,4 млн /226,0 млн тата 239,4 млн/ тенкĕпе танлашмалла.

2013 çулта патшалăх программипе килĕшÿллĕн служба органĕсем ĕç рынокĕн лару-тăрăвне кăткăслатас мар тĕллевпе йышăннă мерăсен пулăшнипе регистрациленĕ ĕçсĕр граждансен йышне çулталăк пуçламăшĕнчи 5520-рен раштав вĕçĕнче 4812 таран е 12,8 процент чакарнă, шута илнĕ ĕçсĕрлĕх шайне 0,84 процентран 0,73 хăварнă. Ку кăтарту çулталăкра вăтамран 0,77 процентпа танлашнă /программăра 0,9 процент çирĕплетнĕ/. Шута илнĕ ĕçсĕрлĕх шайĕпе Чăваш Республики федерацин Атăлçи округĕн регионĕсен хушшинче çулталăкĕпех 3 вырăн йышăннă. Кăçалхи тĕллев – асăннă кăтартăва 0,72 процентран иртермелле мар.

Ĕç рынокĕнчи кăткăслăх коэффициенчĕ 0,4 единицăран 0,3 юлнă е çулталăкра вăтамран 0,33 /программăра палăртни – 0,49/ пулнă. 3,4 пин ĕçпе тивĕçтерекен служба органĕсене 109,6 пин çын кирли çинчен пĕлтернĕ, вĕсенчен 88,7 пинĕшĕ рабочи специальноçĕсемпе çыхăннă.

2013 çулта программа мероприятийĕсене 84521 çын /103,7 процент/ хутшăннă. Служба органĕсене ĕç шыраса пынă 51 пин ытла çынран 42,2 пинĕшне вырнаçтарнă: 17,7 пинне – яланлăх, 24,5 пинне – вăхăтлăх /6810-шне общество ĕçне янă, 14-18 çулсенчи 16668 çамрăка вĕренÿрен пушă вăхăтра вăхăтлăх ĕç тупса панă, вырнаçма кансĕр 710 çынна – сусăрсене, пенси ÿсĕмне çывхаракансене, çартан таврăннисене, тĕрмерен тухнисене – ĕçлĕ тунă, пĕчĕк бизнес йĕркелемешкĕн 126 ĕçсĕр çынна субсиди панă, профессин пуçламăш тата вăтам пĕлĕвĕ паракан вĕренÿ заведенийĕ пĕтернĕ 18-20 çулсенчи 244 çамрăка специальноçпе ĕçлĕ тунă.

Граждансене ĕçе вырнаçтарассин шайĕ 82,4 процентпа танлашнă. Иртнĕ çулхи пĕрремĕш çур çулта ку енĕпе Чăваш Ен Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен хушшинче 2-мĕш вырăн йышăннă.

Ĕç шыракансене вырнаçтарассин шайĕ вакансисен банкне пахалăхлă йĕркелениpe çыхăннă. Раççей Ĕç министерстви «Раççейри ĕç» портала уйрăм контроле илнĕ. Вăл 2014 çулхи кăрлачра иртнерĕ мониторинг тăрăх Чăваш Ен вакансисене 5 кунра çĕнетсе тăрать /Раççейре – 18, ФАОра – 6 кунра/.

Раççей Президенчĕн 2012 çулхи çу уйăхĕн 7-мĕшĕнчи «Патшалăхăн социаллă политикине пурнăçламалли мероприятисем çинчен» 597-мĕш указĕпе килĕшÿллĕн республикăра инвалидсене ĕçпе тивĕçтерес тата вĕсене обществăна интеграцилес тĕллевлĕ мерăсен комплексне пурнăçа кĕртеççĕ. Чăваш Республикин саккунĕ тăрăх 100 çынран ытларах коллективсенче инвалидсене йышăнмашкăн 2011 çулхи чÿк уйăхĕнчен 2 процентлă квота çирĕплетнĕ, 2013 çулхи чÿк уйăхĕнчен вара 35-100 çын шутланаканнисем валли те 1,5 процентлă квота палăртнă. 2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне сусăрсене ĕçе илмелли квотăна республикăра 88,4 процент пурнăçланă /2013 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне – 86,6/, Муниципалитетăн 26 йĕркеленĕвĕнчен 9-шĕ инвалидсене йышăнмалли квотăна 100 процента çитернĕ. Кăçалхи нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне ăна 35-100 çынлă организацисем 56,1 процент тултарса 600 ытла инвалида илнĕ. Муниципалитетăн 8 йĕркеленĕвĕн кăтартăвĕ 100 процента çитнĕ.

Сусăрсем валли ятарлă вырăн уйăрассине тивĕçлипе хаклаççĕ. Пĕлтĕр ун пеккисене 279 организацире 322 хатĕрленĕ. Республикăн тĕллевлĕ программи тăрăх çак тĕллевпе тăккаланнăшăн ĕçпе тивĕçтерекенсене федераци тата республика бюджечĕсенчен саплаштараççĕ.

2013 çулта ятарлă вырăнсене 102 сусăра йышăннă, çак тĕллевпе 6,8 млн тенкĕ тăкакланă. Раççей Ĕç министерстви 2014 çулхи нарăс уйăхĕн 3-мĕшĕнче курав мелĕпе иртнерĕ конференцире асăннă тĕллевпе уйăрнă укçа-тенкĕпе эффективлă усă курнă регионсен хушшинче Чăваш Республики пулнине те палăртнă.

2014 çулта ятарласа майлаштарнă вырăнсене 106 инвалида илмелле, асăннă тĕллев валли 7,4 млн /федераци бюджечĕн субсидийĕ – 7,0 млн, республикăн – 420,0 пин/ тенкĕ палăртнă. Раççей Ĕç министерствипе укçа уйăрас пирки тунă килĕшĕве кăçалхи нарăс уйăхĕн 17-мĕшĕнче çирĕплетнĕ. Хальхи вăхăтра Раççей Правительстви ĕçпе тивĕçтерекенсен тăкакĕсене саплаштармалли суммăна 69,3 пинрен 100 пине çитерессипе çыхăннă ыйтусене тишкерет.

2010-2013 çулсенче инвалидсем валли майлаштарнă 504 вырăн йĕркеленĕ, 2014 çул пуçламăшĕ тĕлне вĕсенчен 464-шне сыхласа хăварнă, предприятисен ĕçлеме пăрахнипе 40-не пĕтернĕ. 403 вырăнта инвалидсем паян кун та ĕçлеççĕ, 61-шĕ тĕлĕшпе служба центрĕсем ĕçпе тивĕçтерекенсемпе пĕрле тивĕçлĕ кандидатсене суйлаççĕ.

Инвалидсене ĕçе вырнаçтарнин шайĕ пĕлтĕр центра пулăшу ыйтма пынисен 64,7 процентĕпе танлашнă. 2013 çулхи пĕрремĕш çур çулта ку кăтартупа Чăваш Республики Раççей Федерацийĕнче 5-мĕш вырăна тухнă /Раççейре вăтамран – 37,3 процент/.

Рынокри тупăшма пултараслăха ÿстерес тĕллевпе 2013 çулта ĕçсĕр 3354 çынна профессие вĕренĕвне янă. Çакăн эффективлăхĕн хаклавĕ – ĕçлĕ пулнин кăтартăвĕ. Вĕсен 1,13 процентĕ /индикатор – 1,8/ кăна ĕçсĕрсен йышне тепĕр хут тăнă. Кăçал хушма пĕлÿ илмешкĕн 2916 çынна яма палăртнă.

Чăваш Республикин экономикине модернизацилес тата технологи тĕлĕшĕнчен аталантарас енĕпе ĕçлекен Канашăн ĕç ушкăнĕпе килĕшу тăвакан служба кăçал «Промтрактор» АУОри 109 тата «Промтрактор-Промлит» ОООри 194 рабочие профессие вĕренĕвне маларах ярассине йĕркеленĕ. Асăннă организацисен ыйтăвне шута илсе вĕсене рабочи профессийĕсене хăнăхтарнă.

Хальхи вăхăтра инвестици проекчĕсене пурнăçлакан пилĕк предприяти 303 çынна 27 профессие вĕрентме заявка панă.

2013 çулта республикăри ĕçлев службиproизводствăна хутшăнас туртăмлă пенсионерсене профессие вĕрентме пикенчĕ: центрсем янипе 14-ăн тивĕçлĕ специальноç илсе ĕç тупнă. Кăçал тата 70 пенсионера вĕрентмелле, çак тĕллевпе республика бюджечĕнче 532,0 пин тенкĕ палăртса хăварнă.

Раççей Президенчĕн 2012 çулхи çу уйăхĕн 7-мĕшĕнчи «Раççей Федерацийĕн демографи политикине пурнăçламалли мерăсем çинчен» 606-мĕш указĕпе килĕшÿллĕн амăшлăхпа ĕçлеве пĕр килтерес тĕллевпе ачана 3 çула çитиччен пăхмашкăн отпуск илнĕ 427 хĕрарăма пĕлтĕр профессие вĕренĕве янă, ун хыççăн пурне те вырăн тупса панă.

2014 çулта ку йыш 400-тен кая мар пулмалла: 100-шĕ – ачана 3 çула çитиччен пăхмашкăн отпуск илнисем, 300-шĕ – пепкисене 3 çула çитиччен пăхакансем, анчах ĕçлĕ хутшăнусенче тăманнисем. Çак тĕллевпе 5,6 млн тенкĕ тăкакламалла: 1,8 миллионĕ – пĕрремĕшĕсемшĕн, 3,8 миллионĕ – иккĕмĕшĕсемшĕн.

2013 çулта социаллă адаптаци мероприятийĕсене – 2830, психологи пулăшăвĕн тренингĕсене 1971 çын хутшăннă, профессие ориентацийĕн пулăшăвне 32,7 пинĕн тивĕçнĕ.

Çакна палăртмалла: профориентацин витĕмĕ тÿрех палăрмасан та пултарать, ĕç рынокĕ ыйтнине кура улшăнать те: тĕслĕхрен, бухгалтер вакансине йышăнас текенсен йышĕ 2010 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчи 39 çынран кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне 4 юлнă, экономистсем 47-рен – 3, юристсем 25-рен – 2, делопроизводительсем 34-ран – 1. Ун чухне инженерсем ытлашши пулнă тăк /1 ваканси пуçне – 18 çын/, халĕ çитмеççĕ /1 çын пуçне – 3 ваканси/.

Патшалăх пулăшăвĕн пахалăхне ÿстерес тата унпа пурте усă курма пултарччăр тесе хальхи технологисене ĕçе кĕртеççĕ, çав шутра ĕçпе тивĕçтерме пултараканпа скайппа калаçма, документсене электрон мелĕпе çитерме, вакансисен банкне Раççей Перекет банкĕн банкомачĕсем урлă кĕме пулать.

Пĕлтĕр ĕçлев центрĕсен мобильлĕ офисĕсем вырăна 551 хут тухса 640 мероприяти йĕркеленĕ, 7708 çынна патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтернĕ, 1362-шне ĕçлĕ тунă. Кăçал та асăннă мелпе тухăçлă усă курма палăртнă.

Коллегин анлă ларăвĕнче Вăрнар тата Красноармейски районĕсенчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрсен директорĕсем Римма Евсеева тата Иван Козлов ĕçтешĕсене хăйсен коллективĕсен опычĕпе паллаштарчĕç, Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин контрольпе право тивĕçтерĕвĕн пайĕн ертÿçи Владимир Артемьев коллегин кăçалхи ĕç планĕ çинче чарăнса тăчĕ.

Асăннă мероприяти ĕçлĕ калаçу чыслава куçнипе вĕçленчĕ: служба органĕсен хастарĕсене çитĕнÿсемшĕн тата ентешĕмĕрсене пурнăçра тивĕçлĕ вырăн тупма пулăшас енĕпе хывнă сумлă тÿпешĕн Хисеп хучĕсемпе сумларĕç.

■ **Валентина СМИРНОВА**

## Деклараци вăхăчĕ

***Федерацин налук службин республикăри управленийĕ 2014 çулхи деклараци кампанийĕн пĕрремĕш уйăхне пĕтĕмлетнĕ.***

Нарăсăн 1-мĕшĕ тĕлне налук органĕсем уйрăм çынсенчен 10,2 пин деклараци йышăннă, ку пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен 12,2% нумайрах. 1 млн тенкĕрен пуçласа 10 млн тенкĕ таран тупăш пирки 230 декларант пĕлтернĕ, 1 декларантăн тупăшĕ 100 млн тенкĕрен иртнĕ.

ФНС управленийĕ аса илтерет: тупăша декларацилеме тивĕç çынсен çак ĕçе ака уйăхĕн 30-мĕшĕнчен кая юмасăр пурнăçламалла. Социаллă сăлтавсемпе, пурлăхпа çыхăннă тăкаксене кура вĕсене налук хумалли тÿлев шутĕнчен кăларма деклараци таратакансем çак çăмăллăхпа çулталăк тăршшĕпех усă курма пултараççĕ.

Налук декларацийĕн бланкне пурăнакан вырăнти налук органĕнче тÿлевсĕрех параççĕ е налук службин сайтĕнчен пичетлесе кăларма май пур. Çавăн пекех сайтра www.nalog.ru/rn21/ program/fiz/decl/ адреспа «Деклараци-2013» программăна вырнаçтарнă, унпа налук отчетне хатĕрленĕ чухне усă курма пулать.

**Н.ДМИТРИЕВ.**

## Ĕçтешсем – лауреат

***Асăннă хаçата нарăсăн 26-мĕшĕнче Мускавра иртекен Пĕтĕм Раççейри «СМИротворец» конкурс чыславне чĕннĕ. Ăна, Раççейре пурăнакан халăхсен туслăхне, культурипе аталанăвне çутатакан статьясен «тупăшăвне», Раççей Президенчĕн Администрацийĕн пулăшăвĕпе Этноссен хушшинчи журналистсен гильдийĕ иртерет-мĕн.***

Кăçал унта массăллă информацин 632 хатĕрĕнче вăй хуракан 7 пин ытла журналист хутшăннă. «Советская Чувашия» конкурса Чăваш Енре пурăнакан тĕрлĕ халăх пурнăçĕпе йăли-йĕркине çутатакан «Пысăк çемье» проектпа тăратнă. Пысăк çак ĕç ЧР Информаци политикин министерствин пулăшăвĕпе кун çути курнă.

2013 çул вĕçĕнчех жюри /ĕçсене профессионал журналистсем, ученăй этнологсем тата ыттисем хаклană/ çĕнтерÿçĕсене палăртнă. Вĕсем пурĕ вăтăр иккĕн-мĕн. Анчах йĕркелÿçĕсем вĕсен хушшинче халăха пĕлтерме васкаман. Интернет-сасăлав йĕркелесе халăх шухăшне те пĕлес тенĕ. «Собеседник Армении» Интернет-сайт пуринчен ытла сасă пухнă. «Советская Чувашия» хаçатăн – иккĕмĕш кăтарту, 168 миллион балл.

**А.ГРОМОВА.**

## Тăван чĕлхе кунне халалласа

***«ЮНЕСКО» йышăннă тăрăх нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ - Пĕтĕм тĕнчери тăван чĕлхе кунĕ. Çак уява чăвашлăх хастарĕсем те манмаççĕ. Ăна халаллană мероприятие вĕсем тĕп хулари «Шупашкар: 500 çул» культурăпа кану паркĕнчи чăваш Юпи умĕнче пухăннă.***

Тĕл пулу-пухăва ЧНК унчченхи президенчĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн икĕ суйлаври депутачĕ пулнă Геннадий Архипов уçнă. Владимир Иванов профессор чăваш чĕлхин пĕлтерĕшĕпе вырăнĕ, чăвашлăха упраса аталантарас тĕлĕшпе республикăра мĕнмĕн туни, ку енĕпе пурнăçлама палăртнă тĕллевсем тата вырăнран тапранайман ĕçсем пирки чарăнса тăнă. Шупашкарти 33 тата 56-мĕш шкулсенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем Ирина Диарова, Галина Николаева, ЧНК хастарĕсем Константин Портнов, Владислав Никитин предприниматель, Николай Курицын тата ыттисем тухса каласнă.

**К.ТИМЕШ.**

## Унăн ячĕ – Олимпиада

***Шупашкарти Калинин район администрацийĕн ЗАГСĕнче тин çуралнă хĕр ачана, хĕллехи Олимп вăййисен вăхăтĕнче çут тĕнчене килнĕскере, ашшĕ-амăшĕ Олимпиада ят хума тĕв тытнă.***

ЗАГС пуçлăхĕн Галина Красновăн шухăшĕпе – спортăн чи пысăк мероприятийĕ ячĕпе тÿр килекенни районта кăçал пулман-ха. Пепке Владимирпа Валентина çемйинче – виççĕмĕш ача. Асли Мефодий – 18 çулта, Анжелика – çиччĕре.

Авалхи грексен хĕрарăм ячĕ Олимпиада «тÿпене, турăсене мухтакан» пĕлтерĕшлĕ. Çак ятпа çÿрекенсенчен чи малтан чапа тухнă çын – Олимпиада Эпирская, Александр Македонский амăшĕ.

**В.МИРСКАЯ.**

Аркадий Айдака колхоз председательне суйланăранпа – 50 çул

# Хăй хыççăн вăл хăварчĕ палăк...



***Ырă ят-сума, пысăк хисепе, пурăннă чухнех палăк лартма тивĕçнĕ мухтавлă председатель Аркадий Айдак Етĕрне районĕнчи «Ленинская искра» колхоза ертсе пыма тытăннăранпа çур ĕмĕр çитет. Ун чухне вăл 27 çул та тултарман. Ял çыннисем ăна пултарулăхĕпе хастарлăхне, хăюлăхĕпе тавра курăмне кура хуçалăх тилхепине шанса панă.***

Аркадий Павловичăн ырă та пархатарлă ĕçне чылай çул каяллах çĕр-шывĕпех лайăх пĕлнĕ, халĕ те тĕслĕх илеççĕ. Колхоза ертсе пыма тытăнсанах, çамрăк та хĕрÿллĕскер, халĕччenхи пек мар, производствăна йăлтах çĕнĕлле йĕркелесе çирĕп никĕс хывма, экономикăпа социаллă пурнăçа лайăхлатса çирĕплетме тĕллев тытнă. Унăн пуçарăвĕсене, республика ертÿлĕхĕ пурнăçланасса шанманран, ăнланасшăн пулман – ура хума тăнă. Анчах çирĕп шухăш-кăмăллă та хĕрÿ чĕреллĕ ертÿçĕ парăнман, суйласа илнĕ çул-йĕртен пăрăнман. Хăйĕн сăмахне, ĕмĕт-тĕллевне темиçе çултанах пайăр ĕçпе çирĕплетнĕ.



Юлса пынă хуçалăх районта малтисен йышне кĕнĕ. Тыр-пул тухăçĕ, выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕ палăрмаллах ÿснĕ. Машина-трактор паркĕ çĕнĕ техникăпа пуянланнă. Çынсем ĕç укçи ытларах илме тытăннă, яла çĕнĕ сăн кĕнĕ.

Эрозие хирĕç кĕрешсе çырма хĕррисене çирĕплетнине, выльăх апачĕ тулăх туса илнине, пĕве-кÿлĕ тутарса пулă ĕрчетнине, вăрмансенче тĕрлĕ чĕр чун хунаттарнине «Ленинская искрăн» ырă ĕçĕ-хĕлĕпе, тĕллевлĕ аталанăвĕпе паллашма пырса çÿренисем, «Хыпара» çулленех çырăнакансем, ăна кулленех тимлĕ вулакансем хаçат урлă лайăх пĕлсе тăнă. Çавăнпа та Аркадий Павлович хастарлăхне пула тунă çитĕнÿсем пирки чăрăнса тăмасан та юратчĕ пулĕ те, анчах вăл «Ленинская искра» хуçалăха ертсе пыма тытăннăранпа 50 çул çитнĕ май çаксем пирки кăштах та пулин аса илмесĕр май килместех. Ара, Аркадий Айдак çинчен çав çулсенче СССРта çеç мар, Европăра та, АПШра та пĕлнĕ. Хаçат-журнал ĕçченĕсем интервьюсем илме килсех тăнă.

Унпа эпĕ те темиçе хутчен тĕл пулнă. Пĕрремĕш хут Етĕрне тăрăхне 34 çул каялла кайнăччĕ. Ытла та сăпайлă пулнăран, хăйне нихăçан та ыттисенчен уйăрманран, ансат тумланнăран питĕ тĕлĕнеттĕм. Халăх хушшинче ăна тÿрех уйăрса илме те май çукчĕ. Çав вăхăтрах вăл принциплă, ăшă та ырă кăмăллă çыннччĕ, хăйĕнчен те, ыттисенчен те çирĕп ыйтатчĕ.

Аркадий Павлович ял культурине, ут спортне аталантарассишĕн те нумай вăй хунă. Ырă кашни пуçарăвĕ пĕрлешÿллĕ хуçалăхшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ, çав вăхăтрах халăх ырлăхĕшĕн те пулнă. Çавна пулах «Ленинская искра», 14 яла пĕрлештерекенскер, çĕр-шыв экономики «авăра» лекнĕ çулсенче те йывăрлăхсене парăнмарĕ, республикăри нумай-нумай хуçалăх пек арканмарĕ.

Аркадий Айдак пирĕн хушăмăртан яланлăхах кайнăранпа кĕçех çултаlăк çурă çитет. Вăл ертсе пынă хуçалăха, унăн ырă ĕçĕсене ĕмĕр-ĕмĕрлĕхе хăварнă палăкпа танлаштарас килет. Вăл чăнласах ял халăхĕшĕн, тăван колхоз аталанăвĕшĕн чунне панă пысăк чĕреллĕ чăн-чăн Çын пулнă.

Колхоз халĕ те А.Айдак тытса пынă çул-йĕрпех аталанать. Пĕлтĕр те, çанталăк савăнтармарĕ пулсан та, тыр-пул тухăçĕ япăх марччĕ.

«Ленинская искра» республикăри пĕрлешÿллĕ мĕн пур хуçалăхшăн – ырă тĕслĕх.

Правлени умĕнче стела вырнаçтарма палăртнă. Вăл килен-каяна Аркадий Айдак çинчен аса илтерсех тăрĕ, эпир вара вăл ĕмĕр-ĕмĕрех пирĕн чĕресенче пурăннине туйса тăрăпăр.

■ **В.ВАЛЕНТИНОВ**



● Студент чухне.



● Чăваш çыравçисемпе.



● Çамрăк çемье.



● СССР Халăх депутачĕсен съездĕнче.



● Айдака – мухтав!

## Айдакăн кун кĕнекинчен

***23.02.64. Отчетпа суйлав пухăвĕ. Мана «Ленинская искра» колхоз председательне суйларĕç.***

***24.02.64. Çĕнĕ зоотехникпа М.А.Албутовăпа I, II, III бригадăсенче тата Мăн Шемертенре. Мăн Шемертенре /V бригада/ пуху ирттертĕм: бригадира суйламаллаччĕ. П.И.Авдеева суйларăмăр.***

***25.02.64. 6 сехетре – правленире. 12 сехетре II бригадăри запарникре, пăрçа улăмне вĕтетнĕ çĕрте. 14 сехетре подстанцие йышăнма Яракассине /В.Федоровпа пĕрле/ тухса кайрăм. Анчах май килмерĕ: розеткăсене вырнаçтарса пĕтермен. Тавраннă чухне 21 сехетре – Мăн Шемертенри фермăна.***

***26.02.64. Ирех правленире. 12.20-рен пуçласа каçхи 5 сехетчен – лару.***

***27.02.64. Л.Г.Григорьев бухгалтерпа Етĕрнене кайрăмăр: алă пустартăмăр – ссуда илессине татса патăмăр.***

***28.02.64. 6 сехетре – правленире. Каярах: I бригадăра пĕр колхозницăпа ĕне улăштарма, П.С.Семеновпа вăкăрсене самăртмашкăн тăратма палăртрăмăр. II бригадăри Е.Е.Шоркинăпа калаçса илтĕм. II бригадăри лаша витинче пултăм. 14.30 сехетре – каллех правленире. СМУ-2 представителĕсемпе килĕшĕве алă пусса çирĕплетрĕмĕр. Ун хыççăн III бригада ферминче: пăрусене I бригадăна куçаратпăр. Каçхине – Мăн Шемертенре выльăх-чĕрлĕх пăхакансемпе канашлу. Миронов пулчĕ. Кайран – А.Е.Ястребов патĕнче. Н.Петров тракториста вăратса пулăшма ятăм.***

***29.02.64. 6 сехетре – правленире. Пĕр трактора – çуламалăх тăвар патне, тепĕр тракториста – Советски салине «Беларуç» илме, каçхине Мăн Шемертене комбикорм кÿме трактор ятăм. Çур çĕрте çывăрма выртрăм.***

***1.03.64. 6 сехетре – правленире. III бригада ферминче пушмак пăрусем валли вырăн палăртрăмăр, I тата II бригадăсенче вăкăрсене самăртма уйăртăмăр. I тата III бригадăсенче çĕр улмипе кăшман бурчĕсене пăхса çаврăнтăм. Каçхине 5 сехетре – Мăн Шемертен ферминче çĕр улми буртне пăхса çаврăнтăм, трактористсене чĕнсе илтĕм. 21 сехетре таврăнтăм, 22.30-чен правленире пултăм. Фекла Волковăпа, унтан И.Н.Никифоров бригадирпа калаçрăм. 23 сехетре çывăрма выртрăм.***




2004 ҫулхи кӑрлачӑн 17-мӗшӗнче тухма пуҫланӑ

**Нарӑс, 23: Тӑван ҫӗр-шыв хӳтӗлевҫин кунӗ**

# Ҫар тесен сехре хӑпмасть, асра – ырри кӑна

***Пурте мар, ҫапах паянхи ҫамрӑксенчен ытларахӑшӗ урӑхларах ҫав – ҫар тесен нумайӑшӗн сехри хӑпать. Вӑхӑтлӑх ҫар служби паян ҫултала-ка кӑна тӑсӑлать пулин те призывран тарса ҫӳрекен чылай. Анчах салтакра пулнисенчен никамран та «ҫамрӑк ҫулсене ҫарта пулса сая ятӑм» тенине илтмен. Пурте ҫар пирки пурнӑҫ шкулӗ теççӗ, ҫав ҫулсене ырӑпа кӑна аса илеççӗ. Савӑнӑҫли-кулӑшли мӗн чухлӗ пулнӑ тата! Тӑван ҫӗр-шыв хӳтӗлевҫин кунӗ умӗн эпир шӑпах ҫавнашкал самантсене пӗр страницӑна пухас терӗмӗр.***



### «Тӳлевлӗ-и?»

Служба пирки сӑмах вакласть, анчах ҫак йӗркесен авторӗ хӑй ҫарта пулнӑ-ши тесе ӳпкелесрен сыхланса тӳрех калам: пулнӑ – салтак пӑтти 2 ҫул ҫинӗ. Паллах, аса илмелли пайтах. Ҫав шутра – тӗрлӗ путиш те. Сывлӑш-десант ҫарӗсенче пулнӑ май парашютпа пӗрремӗш хут сикни халӗ те паянхи пек асра. Йышӑнатӑп: хӑранӑччӗ. Алӑк уҫӑлать те – умра вӗҫсӗр-хӗрсӗр тӗнче. Ҫавӑнта тухса сик-ха...

Ҫапах сӑмахӑм урӑххи пирки. Кулмалли самант нумай пулнӑ. Пӗлмешкӗн малтанах ҫакна калам: парашютпа сикнӗшӗн салтаксене укҫа тӳлетчӗҫ. Ахаль «шалу» ун чухне 8 тенкӗччӗ, хушса – парашютпа сикнӗшӗн. Хӗҫ-пӑшалсӑр сиксен 1,5 тенкӗччӗ пек ас тӑватӑп, хӗҫ-пӑшалпа пулсан – 3 тенкӗ. Самай пысӑк укҫаччӗ – буфета кайса тӗрлӗ пылак ҫимӗҫпе сӑйланма ҫитетчӗ.

Вӑт, ҫамрӑк салтаксем пуҫласа парашютпа сикнӗ. Пӗрин парашючӗ уҫӑлман. Телее, ӗҫ-пуҫ хӗлле пулнӑ, каччӑ тарӑн юрпа витӗннӗ шурлӑха ӳкнӗ, чӗрӗ юлнӑ! Тӑнне ҫухатнӑскере госпитале ӑсатнӑ. Тепӗр кунне ҫакскер тӑна кӗнӗ. Пӗлетӗр-и, пирвайхи ыйтӑвӗ унӑн мӗнлерех пулнӑ? Куҫне уҫсанах вӑл ҫапла ыйтнӑ: «Сикнӗшӗн мана укҫа тӳлӗҫ-ши?» Тӳлевӗ парашютпа сикнӗшӗн-ҫке, ку вара парашютсӑрах сикнӗ пек пулса тухать – ҫавӑнпа иккӗленнӗ ӗнтӗ. Сӑмах май, хамӑрӑн полкра 2 ҫул хушшинче камӑн та пулин парашючӗ уҫӑлманнине ас тумастӑп.

ВДВ «учебкисем» Балтика тӑрӑхӗнчеччӗ. Отделени командирӗсене, механик-водительсене, наводчик-операторсене унта хатӗрленӗ те ҫӗр-шывӑн тӗрлӗ кӗтесӗнчи десант чаҫӗсене ӑсатнӑ. Ҫавӑнтан ачасем анекдот евӗр пӗр истори илсе килнӗччӗ. ВДВ ҫар чаҫӗсем пӗр вырӑнтах темиҫе те, вӗсен хушшине вара темле майпа шалти ҫарсен чаҫӗ лекнӗ. Ун чухне цензура текенни ҫирӗп пулнӑ май хӗрлӗ пакунлӑ салтаксенчен пӗрин килне янӑ ҫырӑвне тытса чарнӑ. Вӑл унта ҫапларах ҫырнӑ-мӗн: «Атте-анне, эпир мӗн сыхлатпӑр – калаймастӑп, анчах питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ объект пулас, мӗншӗн тесен пирӗн ҫар чаҫне йӗри-тавра сывлӑш десанчӗн темиҫе полкӗ хураллать».

Тус-пӗлӗш, журналистикӑра ӗҫленӗ ҫулсенче курнӑҫнӑ ҫынсем те ҫарти служба пирки кӑсӑклине, тепӗр чух кулса виллеллине пайтах каласа панӑ. Вӗсенчен хӑшӗсемпе вулакана та паллаштарас кӑмӑл пур.

### Кӑпӑксӑр шампунь

Вениамин Иванов Украинӑра салтакра пулнӑ. Шӳтлеме юрататанскере итлесе тӑранмалла мар. Килтен посылка илни ҫарта – чӑннипех пысӑк уявччӗ. Веньӑн та илес килнӗ. Ҫийӗнчен салтак альбомӗ хатӗрлеме /ун чух лавккара туянма май ҫукчӗ/ ӑна эбоксит ҫилӗмӗ кирлӗ пулнӑ. Килӗнчен ыйтса янӑ. Посылкӑна тӗрӗслеççӗ вӗт – ҫав ҫилӗме пытарма, урӑх савӑта тултарса яма, сӗннӗ.

Чӑнах та, кӑштахран тӑван енӗнчен посылка та ҫитнӗ. Тӗрлӗ ӗҫме-ҫиме, нуски-алса тата ... шампунь. Питӗ лайӑх – хуҫалӑх супӑнӗпе ҫӑвӑнса ҫитӗ! Мунча кунӗнче взвочӗпех ҫӑвӑнма каяççӗ. Тусӗ Леша Веньӑна асӑрхаттарать: «Шампуньне манса ан хӑвар!» Паллах, илме манмасть – пурте ҫӑвӑнччӑр, эпир хыт кукарсем мар вӗт. Чи малтан шӑпах Леша пуҫне ҫума пикенет. Хайхи шампуне юхтарса илет те пуҫне сӗрет. Мӗншӗн кӑпӑкланмасть? Татах сӗрет. Мӗн амакӗ – ҫыпӑҫать! Ҫак самантра тин Веня килӗнчен ҫилӗм ыйтса янине аса илет. Эбоксит вӗт ку! «Тусӑм пӗр тӑхтамасӑр парикмахерские чупрӗ. Унта «скальпне» сиенлес мар тесе вӑрах аппаланнӑ, ҫилӗме ҫӳҫӗпе пӗрле аран-аран хырса илнӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн «асатте» пулнине пӑхмасӑр шакла пуҫпа чылай ҫӳрерӗ», – аса илет Веня.

Паян энергетика тытӑмӗнче ӗҫлекен Юрий Алексеенко флотра служба́ра нумай ҫул пулнӑ, карап капитанӗ таран ӳснӗ. Камчаткӑра пулнӑскер пӗррехинче килтен тухса кайсан унта 2 ҫултан тин таврӑнни ҫинчен калать. Ҫавнашкал вӑрах ишев. Хӗрлӗ тинӗсре ишевре пулнине манмасть: «Питӗ шӑрӑх, карап металӗ хӗрсе каять, шыв сапсан – вӗреме кӗнӗ пек...» Акула кӗтӗвӗсем ишнине курса тӗлӗннӗ – пысӑкскерсем, 1,5-2 метр тӑршшӗскерсем, кӗтӗвӗнче вуннӑран та ытла пуль – шыв витӗр лайӑх курӑнаççӗ. Моряксем вӗсене тытнӑ та-мӗн. Акула ашӗ ҫиме юрӑхсӑр – вӑхӑта ирттермелле тенӗ пек аппаланнӑ ӗнтӗ. Тинӗсӗн ҫак чӗр чунӗсем питӗ ҫӑткӑн-мӗн: ятарлӑ вӑлта йӗппи те кирлӗ мар, пралук вӗҫне авса унтан хӗрлӗ пусма татӑкӗ ҫаклататӑн та – хыпаççӗ кӑна! Ӗнерхи капитанӑн акула тытса тунӑ сӑн ӳкерчӗк те пур. Чӑн та, пысӑкки мар, пӗчӗкки, «сувенир вырӑнӗнчи акула» тет ун пирки моряк.

Виктор Чиндарев та – ӗнерхи офицер. Службӑна Суворов шкулӗнченех пуҫланӑ темелле. Ача чух бокспа туслашнӑ. Хусанти ӑмӑртура ӑна асӑрханӑ – Суворов училищине чӗннӗ. Аса илӗвӗ те – ҫирӗп дисциплинӑллӑ ачалӑхранах:

– 1972 ҫулхи ҫулла питӗ шӑрӑх пулнӑччӗ – торф вырӑнӗсем ҫунатчӗҫ. Пире стрельбищӗне илсе кайрӗҫ. Кам лайӑх перет – канать, япӑххисем татах переççӗ. Тусӑмпа хамӑр ӗҫе пурнӑҫларӑмӑр та – йывӑҫ айне сулхӑна кайса выртрӑмӑр. Ыттисем переççӗ. Пысӑк сӑпса вӗҫсе ҫӳренине асӑрхарӑмӑр. Йӑви кунтах иккен. Коля сӗнӳ пачӗ: «Чакаласа пӑхар-и?» Малалли – чӑн-чӑн камит. Сых ятне ОЗК, противогаз тӑхӑнтӑмӑр та – йӑвана чакалама пуҫларӑмӑр. Унччен те пулмарӗ – унтан хуп-хура пӗлӗт вӗҫсе тухрӗ, пире тапӑнчӗ. Резина витӗрех сӑхаççӗ! Таратпӑр – сӑпсасем пирӗн хыҫҫӑн вӗҫеççӗ. Взвод еннелле чупатпӑр. Унти ачасем вара ОЗК тӑхӑнман. Старшина мӗн пулса иртнине ӑнланса илнӗ май урса кайса кӑшкӑрать. Ҫӑлӑнмалла, анчах ӑҫта? Юнашарах – чӑрмавсен йӗрӗ. Унта шыв тултарнӑ бетон шӑтӑк та пур. Чупса ҫитрӗмӗр, шыва сикрӗмӗр. Хускалмасӑр ларатпӑр. Вӑхӑт иртсен пуҫа кӑларса пӑхатпӑр та – ҫав-ҫавах вӗҫеççӗ, каллех шыва пытанатпӑр. Пӗр сехет ҫурӑ лартӑмӑр пуль – сӑпсасем лӑпланиччен. Ҫакӑн хыҫҫӑн Кольӑпа иксӗмӗр ҫумне училищӗре хушма ят ҫыпӑҫрӗ – «водолазсем».

### Салтакри кино

Тӗлӗнетӗр пуль, анчах Анатолий Костерин артиллерист ҫарта ... кинора ӳкерӗннӗ. 1974 ҫулта вӑл служба́ра тӑнӑ ҫар чаҫӗн командованийӗнчен «Они сражались за Родину» фильмӑн ӳкерӳ ушкӑнӗ салтаксене массӑллӑ сценӑсем валли уйӑрмашкӑн ыйтнӑ. Ҫапла вара ыттисемпе пӗрле пирӗн ентеш те ӳкерӳ площадкине лекнӗ. «Ирхи апат хыҫҫӑн хӑш рота паян хӑш енче «ҫапӑҫассине» пӗлтеретчӗҫ. Ҫапла вара пӗр кунхине эпӗ хамӑрӑннисен енче, тепӗр кун – нимӗҫсемшӗн», – кулса аса илет вӑл. Пӗррехинче ҫӳллӗ ҫитӗннӗ хӗвел ҫаврӑнӑш ани урлӑ каҫакан фашистсене сӑнлама тивнӗ. Пӗр дубльпе ниепле те ӗҫ тухман. Автомат-пулемет тытнӑ фрицсем хӗвел ҫаврӑнӑш хушшинчен тухаççӗ. Анчах кашнин аллинче – хӗвел ҫаврӑнӑш ҫаврашкисем, пурте ӑна шӗкӗлчеççӗ. Хӑшӗсем хӗвел ҫаврӑнӑшне хӗвве, кӗсьене чикме те манман. Паллах, кун пек нимӗҫсем кино валли мар – тепӗр хут ӳкермелле. Анатолин фашист тумне тӑхӑнса сӑнланнӑ ӳкерчӗк те пур.

Ятне палӑртма ыйтман тепӗр пӗлӗшӗм те каласа култарчӗ. Вӑл Ҫурҫӗрте авиацире ҫар тивӗҫне пурнӑҫланӑ. Самолетсем вӗҫсе хӑпаракан, анса ларакан вырӑна пысӑк упа иленнӗ-мӗн. Хӗлле унӑн ҫывӑрмалла, анчах ку темшӗн шартлама сивӗре ыйхӑран вӑраннӑ. Ҫиес килет – ҫавӑнпа ҫынсем патнелле килнӗ пуль.

Хӑрушӑ вӗт – офицерсем ӑна тӗп тума шут тытнӑ. Темиҫен пухӑннӑ та хӗҫ-пӑшал илсе вӑрманалла ҫул тытнӑ. «Чылай вӑхӑт иртсен вӑрманта перкелешни илтӗнчӗ, – аса илет пӗлӗшӗм. – Унтан – упа хӑрушӑ сасӑпа мӗкӗрни! Нумай та вӑхӑт иртмерӗ – сунарҫӑсем сиккипе вӗҫтерсе килни курӑнса кайрӗ... Утамана вӗлерейнӗ-и – сӑмах вакламастчӗҫ. Тӗп тӑвайман пуль. Хӑйсен вара сехри чӑннипех хӑпнӑ. Тепӗр тесен упана та хӑратнӑ пулас – текех килсе курӑнмарӗ. Офицерсем ҫакӑн хыҫҫӑн вӑрмана каймастчӗҫ».

...Хӑшӗсем вара ҫара каясшӑн мар. Мӗн чухлӗ ҫухатаççӗ! Уяв ячӗпе сире, Тӑван ҫӗр-шывӑн хисеплӗ те маттур хӳтӗлевҫисем!

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

● ➡ 6, 11, 12 стр.

КРИМ

*Ҫын тата саккун*

# Хура ҫуртран шурӑ пӳрте куҫасчӗ...



**Укҫа тӳлесе ҫӗнӗ хваттер илесси ытла та хаклӑ – кашниех вӑй ҫитереймест. Апла тӑк ҫыннӑн кивӗ, юхӑнса кайнӑ ҫуртра-хваттертех пурӑнмалла-и? Ҫук, гражданссене юхӑннӑ ҫурт-йӗртен куҫармалли программӑсем пур – патшалӑх укҫа уйӑрать. Влаҫсем саккуна пурнӑҫлама, ҫынсене пулӑшма тивӗҫ. Ҫак пулӑшу курӑмлӑ-и, саккунпа килӗшӳллӗн пулса пырать-и?**

Республика прокуратури нумаях пулмасть шӑпах гражданссене авари пулма пултаракан ҫуртсенчен куҫарнӑ чухне саккунсене мӗнле пурнӑҫланине тишкерсе пӗтӗмлетнӗ. Ҫакна палӑртмалла: Чӑваш Ен территорийӗнче асӑннӑ ӗҫе республика тата муниципалитетсен шайӗнче йышӑннӑ тӗллевлӗ программӑсене тӗпе хурса пурнӑҫлаҫҫӗ. Ҫав программӑсене нумай хваттерлӗ 874 ҫурта кӗртнӗ. Вӗсем юхӑнса ҫитнине, кивӗскерсене пӑсмаллине е реконструкцилемеллине тӗпчевсем ирттерсе ҫирӗплетнӗ.

Гражданссене юхӑннӑ ҫурт-йӗр фондӗнчен куҫарас ӗҫе Патӑрьел, Елчӗк районӗсемпе Ҫӗнӗ Шупашкар хулисӗр пуҫне /ҫак территорисенче авари пулма пултаракан ҫурт-йӗр ҫук/ мӗн пур муниципалитет хутшӑнать. Программӑсене пилӗк тапхӑрпа пурнӑҫлама пӑхнӑ: ӗҫе 2013 ҫулта пуҫланӑ, 2017 ҫулта вӗҫлемелле. Пӗлтӗрхи тата кӑҫалхи пӗрремӗш тапхӑр валли ҫирӗплетнӗ программӑпа килӗшӳллӗн нумай хваттерлӗ 31 ҫуртра пурӑнакан 299 ҫынна куҫарнӑ – вӗсене 121 хваттер панӑ. Ӗҫ малалла пырать.

Прокуратура органӗсем пӗлтӗр тӗрӗслевсем ирттернӗ май вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсен асӑннӑ ӗҫри чылай ҫитменлӗхне тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ. Ҫав шутра – ҫынсене кивӗ ҫуртсенчен куҫарассине тӑсса яни, туллин куҫарманни, кивӗ хваттерсемпе шайлашуллӑ ҫӗнӗ лаптӑксемпе тивӗҫтерменни.

Калӑпӑр, Вӑрмар районӗн прокурорӗ авари пулма пултаракан ҫуртра пурӑнакан, сахал тупӑшлӑ ҫемье ыйтнипе тӗрӗслев ирттернӗ. Ҫак ҫемье Вӑрмар хула тӑрӑхӗн администрацийӗнче ҫурт-йӗр условийӗсене лайӑхлатмаллисен шутӗнче тӑнӑ. Анчах вырӑнти влаҫсем ӑна кивӗ ҫуртран куҫарас енӗпе тӑватӑ ҫул хушши мерӑсем йышӑнман. Ҫавна май прокурор ҫемьене хваттерпе черетсӗр тивӗҫтерме суда тавӑҫ тӑратнӑ, ӑна тивӗҫтернӗ. Халӗ ҫак ҫынсем хӑтлӑ ҫӗнӗ хваттерте пурӑнаҫҫӗ.

Е тата – Красноармейскинчи тӗслӗх. Унта райцентрти Шкул тӑкӑрлӑкӗнчи виҫӗ хваттерлӗ 1-мӗш ҫуртран ҫынсене туллин куҫарманни палӑрнӑ. Икӗ хваттерте пурӑнакансене социаллӑ найм килӗшӗвӗпе урӑх лаптӑк панӑ, ҫав ҫуртрах тӗпленнӗ тепӗр ҫемьене вара кӳрентернӗ. Ку тӗслӗхре те район прокурорӗ суда тавӑҫ тӑратнӑ хыҫҫӑн лав вырӑнтан тапраннӑ – суд йышӑнӑвне пурнӑҫлас енӗпе ӗҫлеҫҫӗ.

Ҫӗмӗрлере вара кивӗ ҫуртра пурӑннӑ ҫемьене урӑх хваттер панӑ, анчах вӑл пӗр пӳлӗмлӗ кӑна. Маларах ҫак ҫынсем икӗ пӳлӗмлинче пурӑннӑ. Ҫемьен пурӑнмалли ҫурт-йӗр условийӗсем япӑхланни куҫ кӗрет. Ҫакна вырӑнти прокуратура курмӑш туман, вӑл ыйтупа тухнӑ хыҫҫӑн район сучӗ ҫак ҫемьене икӗ пӳлӗмлӗ хваттер памалли пирки йышӑну кӑларнӑ. Пурӑнмалли лаптӑк Ҫӗмӗрле хулинче пулмалла, санитарипе техника нормисене тивӗҫтермелле.

Вырӑнсенчи влаҫсем чееленме те пӑхаҫҫӗ: пурӑнма юрӑхсӑр хваттерсенех йӗркеллӗ тесе хаклаҫҫӗ. Ҫапла тусан вӗсен ӗҫ сахалрах вӗт, ҫӗнӗ ҫурт-йӗр валли укҫа шырама та кирлӗ мар. Тепӗр тесен прокуратура органӗсем район-хула администрацийӗсен ҫак «вӑрттӑнлӑхне» пӗлеҫҫӗ – ӑна курмӑш тумаҫҫӗ.

Ҫурт-йӗр пурӑнма юрӑхсӑр тесе йышӑнмалли йӗркене ятарлӑ положенипе ҫирӗплетнӗ. Ҫак ӗҫе ведомствӑсен ятарласа йӗркелекен пӗрлехи комиссийӗсем пурнӑҫлаҫҫӗ. Ыйтӑва татса париччен асӑннӑ положени требованийӗсемпе килӗшӳллӗн пӳлӗмсене, ҫурта тӗплӗ пӑхса хакламалла.

Комиссисен йышне вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсен, регионӑн ҫурт-йӗр надзорӗпе ҫыхӑннӑ полномочисене пурнӑҫлакан, санитарипе эпидемиологи, пушар хӑрушсӑрлӑхӗн тытӑмӗсен, ыттисен представителӗсене кӗртмелле. Ҫавӑн пекех комисси ӗҫне ҫурт-йӗр хуҫине те /е вӑл шаннӑ ҫынна/ явӑҫтармалла. Кирлӗ тӗк проектпа тӗпчев организацийӗсен тивӗҫлӗ квалификациллӗ экспертне те хутшӑнтармалла.

Шел те, пур ҫӗрте те ҫапла тумаҫҫӗ. Ҫӗрпӳ районӗн прокурорӗ, сӑмахран, Ҫӗрпӳ хула тӑрӑхӗнче туса хунӑ комиссие йышра пулмалли темиҫе тытӑм представителӗсене кӗртменнине палӑртнӑ.

Ҫавӑн пекех вӑл е ку ҫурта тӗпченӗ чухне комисси йышӗ тулли пулманни те сайра мар. Хӑш-пӗр ҫӗрте нумай хваттерлӗ ҫуртсенче пурӑнакансене хӑйсене комисси ӗҫне хутшӑнтарман. Ҫакнашкаллине Шупашкар районӗн прокурорӗ тупса палӑртнӑ. Кӳкеҫри Шоссе урамӗнчи 12-мӗш ҫурт тӗлӗшпе шӑпах ҫапла пулса тухнӑ. Ҫавна май комисси пӗтӗмлетӗвне пӑрахӑҫлама, нумай хваттерлӗ ҫурта ҫӗнӗрен тӗпчеме тивнӗ.

Асӑннӑ сферӑра ытти ҫитменлӗх те чылай. 2013 ҫулта республика прокуратури гражданссене юхӑннӑ ҫуртсенчен куҫарассипе ҫыхӑннӑ саккунсене пӑснин 143 тӗслӗхне тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ. Ҫулталӑк маларах ҫакнашкал 85 тӗслӗх пулнине, пӗлтӗр ҫак кӑтарту чылай пысӑкланнине шута илсен гражданссемшӗн кирлӗ хӳтлӗх пурри куҫ кӗрет. Айӑплисемшӗн ҫакӑ ахаль иртмест: 32 ҫынна дисциплина енӗпе явап тыттарнӑ, пӗр тӗслӗхре уголовлӑ ӗҫ те пуҫарнӑ.

**Николай КОНОВАЛОВ**

*Намӑс!*

# Сӗмсӗр те питӗ... ясар

***Ҫакнашкал тӗслӗхсем пирки пӗлсен Патшалӑх Думинчи хӑш-пӗр депутат проституткӑсен ӗҫ-хӗлне легализацилеме, «публичнӑй» ҫуртсем уҫма чӗнсе калани вырӑнлӑ пек те туйӑнса каять. Сӗмсӗр, ясар кӑмӑлне ниҫта шӑнӑҫтарайман арҫынсем унта кайччӑр та – тен, хӗрсемпе хӗрарӑмсене тапӑннӑ тӗслӗхсем сахалланӗҫ...***

Ҫав ҫӗр, пӗлтӗрхи чӳк уйӑхӗн 14-мӗшӗнче, 21 ҫулти хӗр Кӳкеҫри кафере пулнӑ. Хӑшӗсем хӗр пуҫпа ҫӗр варринче ҫавнашкал вырӑнсене ҫӳремелле мар тесе ӳпкелеме пӑхӗҫ те – вӗсемпе килӗшмӗпӗр, ирӗклӗ ҫӗр-шывра ирӗклӗ ҫыннӑн пур ҫӗрте те пулмалли ирӗк пур. Каферен тӑван ялне таксипе каяс тенӗ. Машина часах ҫитнӗ. Унта вара виҫӗ ҫамрӑк иккен. Водитель вӗсене калаӑ адреспа илсе ҫитернӗ, анчах хӗре яла леҫме килӗшмен.

Вӑл урӑх машина чӗнес тесе темиҫе хут та шӑнкӑравланӑ-ха, анчах такси службин диспетчерӗ кашнинчех тӑхтама ыйтнӑ – пушӑ машинӑсем ҫук иккен. Таксипе пӗрле килнӗ ҫамрӑксенчен пӗри ҫакӑнпа усӑ курнӑ та – хӗре хӑйӗн патне чей ӗҫмешкӗн кӗме сӗннӗ. Такси часах килмест, урамра сивӗ – шӑнса тӑрас мар тесе хӗр йыхрава йышӑннӑ...

Хваттере кӗнӗ хыҫҫӑн нумаях та вӑхӑт иртмен – ҫамрӑк хӗр ҫине сиксе ӳкнӗ, ҫӗҫӗпе хӑратса мӑшкӑллама тӑнӑ. Чӑн та, хӑйӗн усал тӗллевне вӗҫне ҫитерейменн – хӗр хирӗҫ тӑни чӑрмантарнӑ. Тыткӑна лекнӗскер балкон ҫине тарса тухма, унтан аяла сикме пултарнӑ. Ҫара уранах ҫывӑхри лавккана чупса ҫитнӗ, унта палламан арҫынна тӗл пулса полицие шӑнкӑравлама ыйтнӑ.

Айӑплине ҫийӗнчех тытса чарнӑ. 23 ҫулти Кӳкеҫ каччи тӗлӗшпе Следстви комитечӗн Ҫӗнӗ Шупашкарти пайӗ уголовлӑ ӗҫ пуҫарнӑ. Ҫак кунсенче район сучӗ приговор та палӑртрӗ: ясар кӑмӑлне чарайманскере 3 ҫул та 4 уйӑхлӑха ирӗклӗхсӗр хӑварчӗ. Ҫак вӑхӑта вӑл пӗтӗмӗшле режимлӑ колонире ирттерӗ.

Шупашкарти Ленин районӗн сучӗ те нумаях пулмасть тӗп хулари техникумсенчен пӗрин 18 ҫулти студенчӗсем тӗлӗшпе пуҫарнӑ уголовлӑ ӗҫе тишкерсе пӗтерчӗ. Пӗрне 9 ҫул та 8 уйӑхлӑха ҫирӗп режимлӑ колоние ӑсатма йышӑнчӗ, тепри преступленин тунӑ чухне 18 ҫул тултарса та ӗлкӗреймен те – ҫул ҫитменскерӗн приговорӗ кӑшт ҫемҫерех пулчӗ, вӑл 7 ҫул пӗтӗмӗшле режимлӑ колонире кирпӗч шутлӗ.

Ҫак ҫамрӑксем пӗлтӗрхи пуш уйӑхӗн 6-мӗшӗнче ҫӗрле хӑйсем паллакан хӗре 9-мӗш пилӗк ҫуллӑх проспектӗнчи ҫуртра тара илсе пурӑнакан хваттере илсе кӗнӗ. 16 ҫултискере иккӗн тан вӑйпа мӑшкӑлланӑ, ытти намӑс ӗҫ тунӑ. Мӗскӗне пуканӑн хуҫӑк урипе сулкаласа сехӗрлентернӗ те – ачашскер икӗ пустаха хирӗҫ мӗн тӑвайӗ? Читлӗхе ҫавраннӑ хваттертен ҫӑлӑнса тухнӑ хыҫҫӑнах вӑл ҫурт ҫывӑхӗнче чарӑннӑ такси водителӗнчен пулӑшу ыйтнӑ – лешӗ полицие шӑнкӑравланӑ.

...Думӑн хӑйне евӗрлӗ сӗнӳсемпе тӗлӗнтерекен депутачӗсен чӗнӗвне тӳрре кӑларасси пирки ӳстеререх каларӑмӑр пуль. Анчах лару-тӑру ҫивӗччи куҫ кӗрет: хӗрсемпе хӗрарӑмсене мӑшкӑлланӑ тӗслӗхсем ытла та ҫинеҫинех. Ҫав шутра ачасем те часчасах шар кураҫҫӗ.

**К.НИКОДИМОВ**

*Суя*

# "Хурах! Машинӑна вӑрларӗҫ!"

***Суя ҫур пурнӑҫ теҫҫӗ. Анчах халӑх каларӑшӗ тепӗр чух тӳрӗ пӗлтерӗшпе ҫавӑрӑнса тухма пултарать. Ҫур пурнӑҫнех мар, анчах ҫак тӗслӗхсенче суеҫӗсен пурнӑҫӗн пӗр пайне, темиҫе ҫул, колонире ирттермешкӗн тивме пултарать.***

19 ҫулти каччӑ руль умне ӳсӗрле ларнӑшӑн явап тытмалла пуласран ҫӑлӑнас шутпа суйнӑ. Улатӑр ҫамрӑкӗ ӳсӗррине асӑрханӑ та – ПАИ инспекторӗсем чарӑнма ыйтнӑ. Ку итлемен, йӗркелӗх хуралҫисем – ун хыҫҫӑн! Йӗкӗт вара транспорт хатӗрне пӑрахсах тарнӑ. Полицейскисем машинӑна эвакуациленӗ хыҫҫӑн каччӑ шалти ӗҫсен пайне хӑй шӑнкӑравланӑ, машинине такам вӑрласа кайни ҫинчен пӗлтернӗ.

Анчах суйни пулӑшман. Ҫавна май ҫамрӑк ҫын транспорт хатӗрӗпе ӳсӗрле ҫула тухнӑшӑн административлӑ яваплӑхран пӑрӑнайман кӑна мар, полицие преступлени пулни ҫинчен суйса пӗлтернӗшӗн те суд тенкелӗ ҫине ларма пултарать. Шалти ӗҫсен вырӑнти пайӗн следстви пайӗн пуҫлӑхӗ Сергей Куликов пӗлтернӗ тӑрӑх – Улатӑр каччи тӗлӗшпе уголовлӑ ӗҫ пуҫарас ыйтӑва тишкереҫҫӗ.

Йошкар-Ола ҫынни пирки вара уголовлӑ ӗҫ пуҫарнӑ, Шупашкар районӗн прокурорӗ айӑплав пӗтӗмлетӗвне палӑртса ӑна суда ярса панӑ та ӗнтӗ. Ку пӑтӑрмах та автомобильпе ҫыхӑннӑ, ҫак тӗслӗхре те унӑн хуҫи суя ҫулӗ ҫине тӑнӑ.

Чаплӑ иномаркӑна вӑл кредитпа туяннӑ. Те страховка илме ӗмӗтленнӗ – ӑна «ҫухатма» шут тытнӑ. Машинӑна Владимир облаҫӗнче хӑварнӑ та Чӑваш Ене килнӗ. Хыркассинче чарӑнсан автомобильне такамсем вӑрласа кайнӑ иккен – полицие ҫапла пӗлтернӗ.

– Преступлени пулни ҫинчен суйса пӗлтериччен вӑл Хыркасси тӗлӗнче видеокамерӑсем ӑҫта вырнаҫнине те тӗпченӗ, – терӗ ку тӗслӗх пирки Шупашкар районӗн прокурорӗн ҫумӗ Анатолий Иванов. – Тӗплӗ хатӗрленнӗ, анчах асӑннӑ вырӑнти видеокамерӑсенчен пӗрне асӑрхаман. Ҫав камера ӳкерӗвне тӗпчени вара питӗ лайӑх кӑтартать: хайхи арҫын калакан вырӑнта унӑн иномарки пулман.

Полици ӗҫ-пуҫа тӗпченӗ май Йошкар-Ола ҫыннин ултавӗ ҫиеле тухнӑ. Ҫавна май ун пирки суяшӑн уголовлӑ ӗҫ пуҫарнӑ. Кӗҫех вӑл суд умне тӑрӗ.

**Н.ДМИТРИЕВ**

● ➡ 11, 12 стр.

Чăваш Енре Культура çулталăкĕ

КУЛЬТУРА ЛИТЕРАТУРА ИСТОРИ ПОЛИТИКА СПОРТ

# Турă панă таланчĕ – тăван халăхăмăр валли



Олег МАЛЬЦЕВ сăн ӳкерчĕкĕсем.

## МАРИНА ФЕДОРОВНА КАРЯГИНА

**1969 çулхи юпа уйăхĕн 16-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Кивĕ Ахпӳртре çуралнă. Чăваш патшалăх телерадиокомпанийĕнче ĕçлет. Вăл хатĕрленĕ фильмсемпе кăларăмсем тĕнче шайĕнчи телефестивальсенче малти вырăнсене йышăннă. Çирĕме яхăн кĕнеке кăларнă.**

**Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ (2012), ЧР Журналистсен пĕрлĕхĕн Çемен Элкер ячĕллĕ премил лауреачĕ (2008), Чăваш патшалăх Çамрăксен театрĕ сцена çине кăларнă «Кĕмĕл тумлă çар» сăвăлла трагедишĕн ЧР Патшалăх премине тивĕçнĕ (2013).**

**Вăл – пĕр ывăлпа пĕр хĕр амăшĕ.**

**– Марина, санăн ачалăх çулĕсем хăйне евĕрлĕ: эсĕ сухан-севок, кишĕр-кăшман уйĕнче çум çумласа нушаланман. Утă çулса та, ĕне суса та курман. Санăн аллунта мĕн пĕчĕкрен пуртă-мăлатук та ручка-кăранташ пулнă. Тин çулнă утă шăршине, тин сунă кăпăклă сĕт шăршине туймасăр ӳснĕ ял хĕрĕ чун-чĕрене çупăрлакан, çĕклентерекен сăвăсем çырма мехел епле тупать-ха?**

– Култаратăн. Хирте çум çумлани, утă çулни, ĕне суни сăвă çырас ăсталăха туптассине пĕлнĕ тĕк эпĕ ун чухне киле те таврăнмастăм! Чăнах та, чи асамлă туртăмпа хăй патне илĕртекенни – çырассиччĕ. Эпир çуралнă тĕле ял пурнăçĕ çăмăлланса пыратчĕ ĕнтĕ. Пирĕн мухтавлă «Гвардеец» колхозра килте ĕне усрама чаратчĕç, сĕт илме эпир фермăна çӳренĕ. Ас тăватăп: виççĕ-тăваттăсенче чухнех дояркăсем сĕт суса пĕтерессе икĕ литр кĕрекен хĕрлĕ бидонпа кĕтсе тăраттăм... Пӳлмесенче ретĕн тăрса тухнă ĕнесем мăш-ш! мăш-ш! сывласа кавлетчĕç, пăслă вите маччинчен тем пысăкăш тумламсем татăла-татăла анатчĕç, сĕтпе тислĕк шăрши ялан хаваслă ферма хĕрĕсен аптраманлăхĕпе пĕрлешетчĕ те тутлă пек туйăнатчĕ... Килелле утнă май такăнса ӳксе тăкса янипе тепре таврăнни те пулнă. Пĕчĕк ача чĕринче мĕнле кăна туйăм хыпса илсе хĕвĕшмен инкеклĕ çавăн пек самантсенче! Яваплăх вĕт вăл! Сана, асли тесе, аçу-аннӳ пĕлтерĕшлĕ ĕç шанса парать, килте пĕчĕк йăмăку «тӳттӳ» кĕтет – эс пур çӳретĕн тĕлĕрсе... Çемье укçине сая ятăн тата. Эп ӳсерехпе ирхине те сĕт пама пуçларĕç. Анне илĕм-тилĕм тăрса кукăль-капăртма пĕçеретчĕ те пиллĕксенче мана вăрататчĕ: «Вĕри кулача сĕтпе сыпса çиме мĕнле тутлине хăвăрах пĕлетĕр, атя, фермăна кайса кил». Пĕлетпĕр çав. Пĕлни тăратать те ăшă вырăн çинчен. Юр çутипе кăна ĕмĕлкесем палăракан тĕттĕм урама тухатăп. Шартлама сивĕ питрен çатăр ярса илет. Кĕрт хушшипе хывăннă сукмакпа утатăп, куçкĕски пек пăрпа витĕннĕ кӳлĕ урлă каçатăп. Хир енче кĕрт йыттисем вĕрсе ирхи шăплăха сехĕрлентереççĕ. Кăчăрт-кăчăрт ура сассине илтсе чупса килсе туласа тăкĕç-и-ха ак... Каялла таврăннă çĕре сĕт пăрланса каятчĕ... Вăт çапла. Суса кĕнине лĕрплеттерсе ларасси мар ку!

Çум çумласси пирки калас тăк нумай ачаллă хĕрарăмсем сухан-севок, чĕкĕнтĕр пайĕ ытларах илессишĕн питĕ хирĕçетчĕç – пире лекмен ку «ырлăх». Асаннен йăмăкĕн çăвартан пăхаканни саккăрăнччĕ. Вĕсен пайĕ те нумайччĕ. Йăранĕсем вăрăм – чĕвен тăрсан та вĕçне кураймăн. Аппа мана мĕнле илĕртмеллине таçтан чухлатчĕ: «Хирти ĕç – савăнăç. Музыка вăл! Тăрисем юрлаççĕ! Ачасем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ – йăран вĕçĕнчи путенене хăшĕ тытайĕ! Пулăшма пыратăн-и?» – тетчĕ сăвăланă пек. Куçăм умĕнче темĕн тĕслĕ, темĕн саслă илем тĕрленетчĕ ăна итленĕ май. Çакăн хыççăн кам тӳссе тăрайтăр? Пушă чухне акман хире «çумласа» çӳренĕ эпĕ: эмел курăкĕ пуçтарса аптекăна леçеттĕм. Пĕчченех утаттăм тавралăх пуянлăхĕпе ирĕклĕхне ăша илсе. Пирĕн енче тĕнче «аслăрах»: вăрман çук, тип-тикĕс уçă хир те çырма-çатра. Хĕвел сана куçунтан тӳррĕн пăхать – ниçта та тарса пытанаймастăн.

**– Телекурав сывлăшне чун-чĕре йышăнсан – çав пурнăçран уйрăлаймастăн, – теççĕ ĕмĕрне тележурналистикăра ирттернисем. Çак сывлăша эсĕ те ытарса пĕтерейместĕн пулмалла – çирĕм икĕ çул ĕнтĕ экранран тухмастăн. Пултарулăхри ĕçӳсене те кунта тар тăкнă вăхăтрах туптатăн. Турă çул кăтартса янă тивлет-и ку?**

– Питĕ тĕрлĕ енлĕ, канăçсăр, чун-чĕрепе ăс-тăна пĕтĕмпех çавăрса илекен çын çинчи ĕç. Тăххăрпа улттăччен пӳлĕмрен тухми сĕтеле тирĕнсе ларакансен тӳсĕмĕнчен тĕлĕнетĕп. Ун пекки ман валли марах. Телекурава лекессишĕн хитре хĕрсемпе япшар каччăсем ăвăнатчĕç. Манăн пуçра та пулман. Радио илĕртетчĕ-ха. Литература институтне Мускава çити тухса каяс килменрен шкул хыççăн историпе филологи факультетне журналист пулас тесе вĕренме кĕтĕм. Пĕр ăсчах, Ефросинья Сергеевна Сидорова, çитмĕл пилĕк студента – те ятран пĕлсе çитейменнипе – мана малтан «хитре сасли» тетчĕ: «Халĕ çав чи хитре сасли тухать те калава аудитори умĕнче вуласа парать». Эпĕ, ютшăнчăк хĕр ача, хыçалта шăппăн ларакансkер, хам пирки сăмах пынине шухăшламан та... Унтан пире, пулас темиçе журналиста, радиона текст вулаттарма илсе кайнăччĕ. Манăн сасса килĕштерчĕç, «пленка çине аван выртать» терĕç. Сарри Мишши редакторпа радио кăларăм та çырнăччĕ. Юлия Перминова режиссер мана уйрăмах хапăлларĕ, каярах Николай Булаткин артистпа пĕрле Çеçпĕл Мишшипе Анастасия Червякова юратăвĕ çинчен каласа паракан кăларăма хатĕрлеме сĕнчĕ. Пĕрремĕш курс хыççăн фольклор экспедицине кайса килсен радиора ĕçлесе пăхас терĕм... Унтан, кĕтмен çĕртен, инкеке лекрĕм: вилĕмпе куçа-куçăн тăрса кĕрешмелле пулчĕ. Уйăхĕ-уйăхĕпе больницăра хăма вырăн çинче пăталанă пек тапранайми выртрăм. Асанне мана, тĕнчере çук аслă чунлă асаннем, кашăкран сыпкăм-сыпкăм çитерсе ача пек пăхса пурăнчĕ. Çурăм шăмми темиçе çĕртен, купарча шăмми хуçăлнăччĕ, ура тупанĕ ванса тĕпреннĕччĕ... Саланнă кĕлеткене тухтăрсем пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтарса çур çула яхăн сиплерĕç. Çурăм шăммин мими сусăрланнă пулсан çут тĕнчене кравать çӳллĕшĕнчен пăхса ĕмĕрлеме тиветчĕ. Тăтăмах. Тертлене-тертлене утма çĕнĕрен вĕрентĕм. Хул туйи çине таянкаласа больницăран тухрăм. Ларма юраманнипе васкавлă пулăшу машини çине вырттарса тăван яла леçрĕç. Мана кун пек шăпа тивĕçтермерĕ – çулталăк сиктермесĕр университета таврăнас терĕм: тăрăшсан – тантăшсене хăваласа çитетĕпех. Тепĕр тăвата уйăх шăла çыртса ура çинче е пукан çине чĕр куççипе тăрса вĕрентĕм... Сесси нихçанхинчен йывăр иртрĕ. Факультетран аллă тăватă студента кăларса ячĕç. Пирĕн ушкăнра та çирĕм пиллĕкрен çирĕмĕн юлтăмăр... Чи çирĕп ыйтакан экзаменсене «пиллĕкпе» тытрăм. Туясене пăрахсан спорт секцине çӳреме пуçларăм. Терт-нуша кăмакинчен хурçă пек шăранса тухнă хыççăн мана нимĕнле тĕрĕслев те этем чăтайми йывăр туйăнмастчĕ...

Паллах, вĕреннĕ чухне телекурава та пире илсе çӳренĕ. Хамăрăн сăвăсене вулама уйрăмах йыхравлатчĕç. Мана ун чухнех ĕçе илесшĕн пулчĕç – самани арпашса кайрĕ. Вĕренсе пĕтерсен те телекуравра çапла тĕпленессе тĕлленмен эпĕ. Шăпа хăй ертсе çӳремен пулсан хам валли çак таран телейлĕ ĕç вырăнĕ суйласа илеймен те пулăттăм-и тен. Чуна выртакан ĕç – чăннипех пысăк телей. Телекурав искусствăн мĕн пур тĕсне пĕтĕçтерсе тăрать – çакă маншăн темрен паха. Мускав филиалĕ пулса хыпарсен кăларăмĕсене тĕп вырăна хума тытăннăранпа кунта режиссерсем юлмарĕç, монтаж режиссерĕсем çеç. Çавăнпа фильм сценарийĕ çырсан режиссер пулса хамăнах ĕçлеме тивет. Манăн «Сто лет спустя» фильм çур çул каялла «Голос Евразии» фестивальте чи пысăк приза тивĕçрĕ. Ку – Чăваш телекуравĕн историйĕнчи иккĕмĕш Гран-при: пĕрремĕшне «Шăпăрлансем» /Пока не все дома/ фильмпа 1998 çулхи раштавра эпирех илнĕччĕ /режиссерĕ – В.Иовлев, операторĕ – манăн яланхи ĕçтеш С.Мышев/. Çав фильмшăнах 1999 çулта Мускавра иртнĕ «Окно в третье тысячелетие» фестивальте «За неординарный вклад в развитие детского телевидения» тесе ылтăн шывĕпе çырнă Пĕрремĕш приз дипломне тивĕçрĕмĕр. Парни те чаплăччĕ. Иртнĕ кĕркунне документлă тепĕр фильм ӳкерсе эфира кăлартăм – «Дамский угодник» Черкесскра иртнĕ «Кунаки» фестивальте Раççейри паллă киномаçтăрсен хушшинче Дипломант пулса тăчĕ.

**– «Вăйлă çын çеç пысăк çитĕнӳсем тума пултарни пуриншĕн те паллă», – тенĕччĕ ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Çĕрпӳ тăрăхĕнче. Эсĕ хăшĕнче – поэзире, драматургире, прозăра, тележурналистикăра – вăйлăрах?**

– Мĕнпе виçмелле ăна? Çĕнсе илнĕ премисен шучĕпе-и? Çук. Кăна вăхăт кăна калаять. Вăл та халех шарламĕ. Маншăн тесен чи пысăк çитĕнӳ – ăнăçлă йĕрке е кадр. Виçĕ-тăватă пьеса çырнипех драматургири вăя туйса илме ирха. Проза каçалăкĕнче те тăватă кĕнеке анчах тухнă. Ытларах – ачасем валли. Поэзи тесен вара – ку ман сывлăш. Эпĕ кунта питĕ хăюллă та ирĕклĕ – вĕçеври кайăк. Поэзи вăл чĕлхен уйрăм вăйне, асамлă хăватне пĕлет, мĕнле сăмахсене юнашар лартсан пач урăх тĕнче тума пулнине тĕлĕнмелле сисĕмпе туять. Пирĕн ăрăва пултарулăхпа кăна пурăнма пӳрмерĕ ĕнтĕ: хальхи патшалăх çыравçа «тара тытса» пăхса усрамасть. Куллен урăх ĕçе çӳренĕрен ларса хайлав çырма вăхăт та юлмасть. Мĕн пурри – чунра пиçсе çитнине, пуçра тĕвĕленнине хăпăл-хапăл чĕркелесе хуни. Пуçтарăнса çитет те – тирпейлетĕн, кĕнеке кăларса вулакан патне çитеретĕн. Канмалли кунсенче – канмасăр, уявсене – уявламасăр çырас килнĕ сăмаха çыратпăр. Вăл та пулин хывăх ан пултăрччĕ.

**– Критиксем санăн поэзине Çеçпĕл Мишшин хĕрӳлĕхĕпе, Константин Ивановăн шалти килĕшӳлĕхĕпе /гармонипе/ танлаштарчĕç, палиндром сăввусен ярăмĕсем хыççăн сана Велимир Хлебниковпа юнашар лартрĕç. Çак хаклавсемпе Марина Карягина сăвăç хăй килĕшет-и?**

– Пултарулăх хăвачĕ кампа юнашар ларнинчен килсен хăшĕ-пĕри пирĕн йышши танлăн тăракансене тахçанах сирсе хăварса тĕпеле хирĕнсе иртмелле. Куркаланă... Эпĕ ун пек чухне пĕччен ларнă пулăттăм – хама кампа та пулсан танлаштарнине килĕштерместĕп. Эпир пурте хамăрăн сăмаха калама килнĕ.

**– Чăваш телекуравĕ хăйĕн юбилейне Оперăпа балет театрĕнче ирттернĕ чухне сцена çине эсĕ лаша утланса тухрăн. Кун пеккине хамăр тăрăхра курманран пурте тĕлĕнчĕç, тăвăллăн алă çупрĕç. «Çар ертӳçинчен нимĕнпе те кая мар», – терĕ пуçăмри ырă вăй. Кала-ха: «Кĕмĕл тумлă çар» сăвăлла трагедие çар пуçĕ пек курса тăрса çыртăн-и е поэт туйăмне ирĕке ярса-и?**

– Ку, ытарлăн каласассăн, хĕçпе çырнă ĕç. Сăмах чи хăватлă хĕç-пăшал иккенне этемлĕх ĕмĕртен пĕлет. Сăвăçăн калемĕ – ухă йĕппи: унăн çивĕчĕшĕнче вĕлерсе чĕртме пултаракан «наркăмăш» пур. «Кĕмĕл тумлă çара» чĕремре çар пуçĕн хевти пулмасан – çыраймăттăм. Чи çивĕч хиствçĕ – чунра пуçтарăннă ырату. Çыравçăн ăшне çут çанталăк темле савăт хурса янă тейĕн. Çумăр çума пултарасса кĕтсе çурт çамкинчи пăрăх айне лартнă валашка пек – тулать те тулать вăл çапла таçтан /çӳлти хăватсенчен-и, сăвăça çуратнă несĕлĕсен юнĕнчен-и?/ килекен уйрăм сисĕм шерпечĕпе. Тӳпеми пулать те – юлашки тумламĕ хайлав халлĕн татăлса ӳкет.

**– «Чăваш поэзийĕн тĕнчери элчин ĕçне Геннадий Айхи хĕрĕ – Анна – туса пырĕ», – тенĕччĕ пĕр интервьюра Атнер Хусанкай. Аня çитĕнет çеç-ха. Çавăнпа та «пушаннă сукмака» курăк пусас хăрушлăх пур. Такăрлатнă çак сукмака тата та анлăлатма çĕнĕ ăрăвăн çĕнĕ поэчĕн – Марина Карягинăн – вăхăт çитнĕн туйăнать.**

– Айхи ку енĕпе чылай туса хăварчĕ. Венгри, Итали, Франци, Швеци тата ытти çĕр-шыв вулаканĕсем патне тăван халăхăмăрăн поэзири ахах-мерченĕсене çитерчĕ, вĕсенне чăвашла куçарчĕ, куçарттарчĕ. Пысăккăн илсен – пирĕн ăру вырăнне те ĕçлерĕ темелле. Тĕрĕс, уçнă çула паян та çухатмалла мар. Куçаруçăсем йăшăлтатни туйăнать. Пĕр хушă критиксемпе куçаруçăсем валли грант пуласси пирки шавларăмăр – шел, тусан тустарни çеç пулчĕ. Эпĕ хурăнташлă халăхсен хайлавĕсемпе кăсăкланатăп, ют чĕлхесем вĕренетĕп. Тĕнче шайĕнчи поэзи фестивалĕсене çуллен тенĕ пек хутшăнатăп. Европăра та, Азире те пултăм. Еврази çыравçисен пĕрлĕхĕнче тăратăп. Хамăн сăввăмсене куçарма сĕнмен, анчах вĕсем чикĕ леш енче те пичетленкелеççĕ. Сăмах май, шведла тухнă антологирисене Анника Бекстрем шăпах Геннадий Айхи сĕннипе куçарнă-мĕн – эпĕ сиссе те юлман. Вырăсла çырнă сăвă-поэма Мускавра кассăн-кассăн тухкалать. «Дети Ра» журналăн кăçалхи пĕрремĕш номерĕнче палиндром меслечĕпе çырнă хайлавсене пысăк вырăн уйăрса панă. Çак журнал редакторĕ, Евгений Степанов çыравçă тата ăсчах, хăйĕн тĕпчевĕнче manăн ята «хальхи Раççейри чи паллă та талантлă палиндромистсен» йышне кĕртнĕ. Кĕтменччĕ. Вырăсла çула май кăна çыратăп: йĕркесем килеççĕ те – пăрахăçламастăп. Çитес вăхăтра палиндром сăвă-поэмăсен чăвашла пысăк пуххине кăларма алă çитересшĕн-ха. Ку чăннипех те пирĕн чĕлхен кĕтречĕ! Тĕлĕнме-савăнма пĕлетпĕр-и хамăр чĕлхепе, çук-и – анчах ку хайлавсем чат хамăр валли кăна пулĕç, вĕсене ют чĕлхене çав пахалăхпа куçарма çук.

**– Марина, санăн сăввусен вырăнĕ-тĕнĕлĕ – çӳл ен. Пĕлетпĕр: çӳлтен йăлт курăнать. Ну, мĕнлерех кунта? Йĕркеллех-и чăваш çĕрĕ çинче? Куçна мĕн тӳрех тăрăнать?**

– Типпе юлнă пулăсем.

**– Мăн асаттесемпе асаннесем «Чăваш тĕнчене тытса тăрать», «Чăваш пĕтсен – тĕнче пĕтет» тесе каланă сăмахсемпе хамăра лăплантарса вун-вун çул нимех те тумасăр пурăнтăмăр та – чĕлхемĕр çĕр çинчен çухаласси патне çитсе тухрăмăр. Ĕмĕрхи ыйту: мĕн тумалла?**

– Нимех те тумасăр мар-ха... Ишме мансан – ураланма хăтлантăмăр. Ĕнтĕ хӳре кирлĕ мар тесе – ăна калта пек татса хăвартăмăр. Калтан тата ӳссе ларать, пуллăн апла мар çав. Çын сиккине сикетпĕр тепĕр чух çапла. Хамăр вăй мĕнрине пĕлместпĕр, шырамастпăр та. Мĕн тумалла? Эп калас чăнлăха куçа курăни-курăнми вĕтĕ кусан-шăван та пĕлет: хамăра сыхласа хăварас тесен – чăвашăн чăваш çуратса ӳстермелле. Пирĕн вара чăваш пулса çуралаççĕ те вырăс пулса ӳсеççĕ. Сывлăшăм çаврăннă чухне эпĕ çирĕп шанчăкпа тӳсĕмлĕн ĕçлесе пурăнасшăн.

**– «Ту тăррине тăрса çил çиллине чаратăп», – тетĕн эсĕ пĕр сăввунта. Çĕр çинчи çанталăка йĕркелесе тăракан çил ачисене те чарма хевте çитеретĕн тĕк – капашлă вăю-хăватупа чăваш нишлĕленсе пынин юхăмне эсĕ те пулин пӳлсе ларт-ха.**

– Хисеплĕ арçынсем! Пирĕн чаплă, влаçлă, ятлă-сумлă паттăрсем! Манăн ахаль те штанга йăтасси кăна юлчĕ ĕнтĕ. Тăван халăх пуласлăхĕшĕн хам шайра мĕн пултарнине пĕтĕмпех тăватăп, тăвăп та. Несĕлсен умĕнчи тивĕçе туйса. Эсир ăçта? Мăшăрăрсене тăван тĕпренчĕкĕрпе хамăр чĕлхепе калаçма та ӳкĕте кĕртейместĕр. Вăрманта çĕтсе кайнă шăнкăравлă пăру пек, орден-медалĕр чăнкăртатни кăна хăлхана кĕрет. «ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ят илмен пуçлăх юлмасть кĕçех – культури вара темшĕн хухса пырать. Ман вăя шанакансем ӳкĕте кĕртнипе «ту тăррине» тăма хатĕррине палăртрăм вĕт-ха – Наци телерадиокомпанийĕн тилхепине урăххине шанса пачĕç. Ку маншăн çăмăллăх, анчах эпĕ çăмăллăх шыракан çын мар: хум майлă ишме çуралман.

**– Пысăк шайлă ĕçсем калăпланăран сана кунта хĕсĕк мар-и?**

– Тăван çĕр-шыв хĕсĕк пулмасть. Яппунсене пăх-ха! Çĕр хĕсĕкки вĕсен мимине ытларах ĕçлеттерет кăна. Чи хăрушши – шалти тĕнче тăвăрлăхĕ. Хĕсĕк чунлă мĕскĕн – уçлăх ирĕкĕнче те пĕрене çурăкĕнчи кăпшанкă.

## БЛИЦ-ИНТЕРВЬЮ

■ **Вилĕмсĕрлĕх эликсирне тупсан эсĕ миçе çулччен лăш курмасăр ĕçленĕ пулăттăн?**

Ун чухне ма лăш курмасăр тар тăкмалла? Чăваш «ыр çын вилет – ят юлать, эпир вилсен мĕн юлать» тесе хăй хыççăн ырă йĕр хăварассишĕн ĕçлет.

■ **Калав е повеç çырнă чухне санпа кам хуçаланать: туйăм-и, шухăш-и, сăнарсем-и?**

Темле терт.

■ **Талантлă специалистран гени /питĕ пултаруллă çын/ мĕнпе уйрăлса тăрать?**

Куç шăрçи çинчи ӳкерчĕксемпе.

■ **Патăрьел тăрăхĕсĕр пуçне сана тата ăçта ытларах вулаççĕ?**

Ентешĕмсем ытти тăрăхринчен уйăрса юратнине пĕлменччĕ.

■ **Паянхи герой саншăн кам?**

Эсĕ. Эпĕ. Эпир пурте. Ку – пирĕн вăхăт. Унăн ураписене пушăлла шалтăртаттарса пырас марччĕ.

■ **«Алран кайми аки-сухи» юрра вĕçне çитиччен пĕлетĕн-и?**

Пĕлетĕп. Ура çине тăрсан ыттисем юрламасан та юрлатăп.

■ **Телевизорпа мĕнле кăларăмсене курма кăмăллатăн?**

Вăйлă режиссерсен çынлăхлă фильмĕсене.

■ **Çылăхлă çĕр çинче тĕрĕслĕх валли вырăн мĕншĕн çитмест?**

Çылăхăн йăви – этем чунĕ, çĕр мар. Тĕрĕслĕх нумай, чăнлăх – пĕрре. Пĕр япалах пĕриншĕн – çылăх, теприншĕн – тĕрĕслĕх. Кам хăшне йышăнать – çавă çын чунне киле кĕрет.

■ **Картран тухнă тăмккая курсан эсĕ мĕн тăваттăн?**

Унăн хăйĕн çулĕ.

■ **Пурнăçунта хăвпа килĕшмен ĕç туни пулнă-и?**

Алла мĕнле ĕç тытсан та юратусăр тăвас марччĕ. Вара вăл ыттисене те юрăхлă пулать.

■ **Чăваш çĕр-шывĕнче мĕншĕн поэтсене çеç палăк лартаççĕ?**

Прозаиксем скульпторсене хальлĕхе хавхалантарманнипе.

■ **Гороскопа ĕненетĕн-и?**

Хам çырнă кун йĕркипе пурăнатăп. Вăл та гороскопах.

Кăларăма Геннадий МАКСИМОВ хатĕрленĕ















КРИМ

## Ултав

# Интернетри кирпĕчсем

***Пĕтĕм тĕнчене çавăрса илнĕ «эрешмен карти» нумайăшне йăлăхтармăш «спампа» тарăхтарать. Хăшĕсене вара чылай йывăртараххи лекет. Калăпăр, кирпĕч...***

Шупашкар çыннине 600 пин ытла тенкĕлĕх лартнă та – çав ултавçă ентешĕмĕрĕн вăл пирвайхи посылкăна уçнă хыççăнхи сăнне курассишĕн самай хаклă тӳлеме хатĕрччĕ пуль. Унăн тем тесен те кулăш туйăмĕ пур. Предпринимательтен аванс шучĕпе пĕтĕм тӳлеве илнĕ хыççăн ăна нимĕн те ярса памасса пултарнă вĕт. Ку вара ярса панă. Чăн та, предприниматель туяннă тавара мар – кирпĕч */сăн ӳкерчĕк/* ăсатнă.

Çапла, Шупашкар бизнесменĕ Мускавран пачах урăх тавар кĕтнĕ. Çĕнĕ çул умĕн вăл Интернетра илĕртӳллĕ пĕлтерӳ асăрханă. Йӳнĕпе курттăммăн сигарет туянма сĕнеççĕ! Хакĕ чăннипех пĕчĕк те – ентешĕмĕр сутуçăпа курнăçса калаçма пĕр тăхтамасăр Мускава вĕçтернĕ. Ыттисем туяниччен ĕлкĕрес тесе хыпаланнă ĕнтĕ.

Тавара тӳрех илсе килеймен. Ăна сутакан çын клиента ӳкĕте кĕртнĕ: сигарет партийĕ хальхаль склада килмелле, эсĕ укçа куçарса парсанах транспорт компанийĕ урлă Шупашкара ăсатăп... Çапла алă çапса килĕшнĕ. Арçын тăван ене таврăннă, хăй пĕлмен çынсен банкри вăхăтлăх шучĕсем çине икĕ кун укçа куçарнă. Пĕтĕмпе – 640 пин тенкĕ. Йӳнĕпе кӳрекен сигарета кунта сутса сахалтан та 300 пин тенкĕ услам тума ĕмĕтленнĕ. Шел, ĕмĕчĕ тӳрре тухман.



Транспорт компанийĕ, чăнах та, груза палăртнă вăхăтра илсе килнĕ. Анчах курупкасенче сигарет мар иккен – кирпĕч тултарнă! Тӳрех полицирен пулăшу ыйтнă. Оперативниксем тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх – кунтан куçарнă укçана чăннипех Мускавра илнĕ. Çавна май Чăваш Енре ирттернĕ тĕрĕслев материалĕсене тĕп хулана ярса пама тивет-тĕр – преступлени пулнă вырăнта тĕпчĕç. Полицин 4-мĕш пайĕн уголовлă шырав оперуполномоченнăйĕ Алексей Савкин каланă тăрăх – банкри вăхăтлăх шутсенчен пĕрне уçма усă курнă паспорт чылайранпа шыравра. Çавна май «виртуаллă» табак сутуçи преступлени тума тĕплĕ хатĕрленни куç кĕрет.

ЧР ШĔМĕн уголовлă шырав управленийĕнче вара Интернетра юлашки вăхăтра ултав мелĕсем вăй илсе пынине палăртаççĕ. Хăш-пĕр çын автомобиль сутма пĕлтерӳ паракансен вăлтине çакланать. Йӳнĕ те – укçа куçарса параççĕ. Çакăн хыççăн «сутуçăсем» тӳрех çухалаççĕ. Теприсене йӳнĕпе дизтопливăпа тивĕçтеретпĕр тесе шăнман пăр çине лартса хăвараççĕ. Нумаях пулмасть Улатăр çынни чикĕ леш енчи пĕр сайтра пĕчĕк хакпа 15 фотоаппарат туянасшăн пулнă. Унта пысăк укçа куçарса панă. Тавар кĕтсе илеймен те – полицие кайма тивнĕ.

Оперативниксем ансат канаш параççĕ: нихăçан та ăса çухатмалла мар. Ытла та йӳнĕ – эппин, виртуаллă анлăшра мĕн те пулин туянас кăмăллă çыннăн иккĕленӳ çуралмалла. Шанчăклă сайтсемпе кăна ĕçлĕр, таваршăн малтанах тӳлеме ыйтакансемпе ан çыхланăр.

■ **Ольга ПАВЛОВА**

## Ыйту-хурав

# Пӳрне йĕрĕ мĕн тума кирлĕ?

**Çынсем хăйсен ирĕкĕпе тăвакан дактилоскопи пирки илтрĕм. Унашкалли пирĕн республикăрах пур-мĕн. Калăр-ха, çакă мĕн тума кирлĕ?**

**Владимир К.**
Канаш районĕ.

**Республикăн Шалти ĕçсен министерствин пресс-службинчен çакăн пек хурав илтĕмĕр:**

– Федерацин 2008 çулхи утă уйăхĕн 25-мĕшĕнче «Раççей Федерацийĕнчи патшалăх дактилоскопи регистрацийĕ çинчен» кăларнă 128-ФЗ№ саккунĕпе килĕшӳллĕн Раççей ШĔМĕн территори органĕсем районсен шайĕнче çĕр-шыв гражданĕсен патшалăх дактилоскопи регистрацине пурнăçлаççĕ. Çакна çынсем хăйсен ирĕкĕпе тăваççĕ.

Илнĕ информацие – çынсем хăйсен ирĕкĕпе панă пӳрне йĕрĕсене – республика ШĔМĕн информаци центрне яраççĕ, вĕсемпе чи малтанах çынсене паллама усă кураççĕ. Калăпăр, тĕрлĕ инкек-синкек вăхăтĕнче /çав шутра аварисем, шыв илни, çĕр чĕтренни, пушарсем тата ыт.те/ документсем юрăхсăра тухсан, çавăн пекех çынсем шар курсан хăйсен ирĕкĕпе дактилоскопи регистрацийĕ витĕр тухнисем кам пулнине палăртасси чăрмав кăларса тăратмĕ.

Ас тăвăма çухатакансене – маларах мĕн пулса иртнине манса каякансене – пӳрне йĕрĕсене пама сĕнеççĕ. Кунашкалли чирлĕ е ватă çынсен пулма пултарать. Кун пек чухне дактилоскопи тăванĕсене çынна тупма пулăшать.

Çынсем хăйсен ирĕкĕпе дактилоскопи енĕпе регистрациленнĕ май илнĕ кăтартусем вăрттăнлăх шутланаççĕ, вĕсемпе усă курас тĕлĕшпе саккун чарусем палăртать. Дактилоскопие патшалăх пошлини е урăх тӳлев илмесĕрех пурнăçлаççĕ. Тĕплĕнрех ЧР ШĔМĕн Интернетри сайтĕнче пĕлме пулать.

# Вĕсем мана кураççĕ...

**Тĕрлĕ çĕрте видеокамерăсем вырнаçтарни пирки çине-çинех çыратăр – çыншăн пытанмалли вырăн та юлмасть пуль... Пĕлтерсемĕр, Чăваш Енре мĕн чухлĕ камера?**

**И.ЕГОРОВА.**
Шупашкар хули.

Çак ыйту хуравне **ведомствăсен техника хатĕрĕсен тытăмĕсене ĕçе кĕртес енĕпе ĕçлекен пĕрлехи комиссийĕн** нумаях пулмасть Шупашкарта иртнĕ ларăвĕ валли хатĕрленĕ материалĕсенчен илтĕмĕр.

Унта палăртнă тăрăх – республика территорийĕнче общество вырăнĕсенче видеосăнавăн 9 пин ытла приборĕ ĕçлет. Çав шутра – тĕрлĕ харпăрлăхри организацисем вырнаçтарнă видеокамерăсем те. Вĕсенчен 313-шĕн «ӳкерчĕкĕсем» ШĔМĕн территори органĕсен дежурнăй чаçĕсене пыраççĕ. Çав шутра 272 видеокамерăна «Хăрушлăхсăр хула» программăна пурнăçласа вырнаçтарнă.

2013 çулта видеосăнавăн 190 камерине, кирлĕ ытти оборудованине туяннă, вĕсенчен 82-шне /57-шĕ – стационар, 25-шĕ – купол камерисем/ – Шупашкарта пĕлтĕрхи юпа уйăхĕнче асăннă программăпа килĕшӳллĕн. Çавăн пекех тĕп хулара васкавлă çыхăнăвăн 26 «Гражданин – полици» хатĕрĕ ĕçлет, унашкаллисем Çĕнĕ Шупашкарта та пур – 6 хатĕр, Муркашра – 1. Палăртни вырăнлă: 2013 çулта «Хăрушлăхсăр хула» АПКн техника хатĕрĕсемпе усă курса 93 преступление уçса панă, административлă правăна пăснин 1,2 пин ытла тĕслĕхне тăрă шыв çине кăларнă.

Ку ĕçе малалла тăсĕç. Хăрушсăрлăха тивĕçтермелли патшалăх программипе килĕшӳллĕн кăçал, малтанлăха палăртнă тăрăх, çак ĕç валли 44 млн тенкĕ ытла уйăрма палăртнă. Çак виçен пысăк пайĕ – 42,9 млн тенке яхăн – муниципалитетсен бюджечĕсенчен.

# Амнисти пирки

**Амнисти пирки чылай калаçрĕç. Интереслĕ, Чăваш Енре амнистие миçен лекнĕ – миçе çынна ирĕке кăларнă?**

**Т.САВЕЛЬЕВ.**
Шупашкар хули.

**Республика прокуратурин пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх** – Патшалăх Думин 2013 çулхи утă уйăхĕн 2-мĕшĕнче кăларнă йышăнăвĕсемпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикинче амнистипе 35 çын ирĕке тухнă.

Малтанхи следстви органĕсем 13 уголовлă ĕçе пĕтернĕ. Çав йышăнусен саккунлăхне тĕрĕсленĕ май прокурорсем 19 çынна уголовлă майпа йĕрлессине вĕçленин тĕрĕслĕхне çирĕплетнĕ. Çавăн пекех 4 çын тĕлĕшпе уголовлă майпа йĕрлессине пĕтерни саккунсăр тесе йышăннă.

Республикăри судсем амнистипе 4 çынна ирĕке кăларнă. Вĕсенчен пĕри – хĕрарăм. Чăваш Енри юсанмалли учрежденисем УК 196 статйипе /ятарласа йĕркеленĕ панкрутлăх/ айăпланнă пĕр çынна амнистипе ирĕке кăларнă. Колонисенче амнисти пырса тивекен 18 çын пулнă, вĕсене пурне те саккун положенийĕсене ăнлантарса панă. Анчах амнистипе айăплавран хăтарнисем – пĕтĕмпе те 6 çын. Вĕсенчен 5-шĕ – автор прависене пăснăшăн ирĕклĕхсĕр хăварнисем, пĕри, хĕрарăм, – укçана налук хурассинчен пытарса хăварнăшăн суд умне тăнăскер.

Амнистипе усă курма пултарнисенчен 11-шĕ сиене саплаштарассипе çыхăннă парăмсене татман, çавăнпа амнистие лекеймен. Çавăн пекех республикăра кредитсемпе çыхăннă ултавшăн, ятарласа йĕркеленĕ панкрутлăхшăн, организацирен илмелли налуксене тӳлеменшĕн айăпланнă 5 çын амнистипе усă курнă. Вĕсене штраф тӳлессинчен хăтарнă.

■ **К.АНТОНОВ ыйтса пĕлнĕ**

• ➡ *12 стр.*

## Пĕлес тенĕччĕ

# Тӳлемесен, ĕç кĕнекине памасан...

**Шалăва вăхăтра тӳлеменшĕн ĕç паракансем тĕлĕшпе мĕнле мерăсем йышăнаççĕ?**

**Ĕçрен хăтарнă хыççăн ĕç паракан çынна ĕç кĕнекине памасан, ĕçленĕ вăхăтшăн шалу тӳлемесен камран пулăшу ыйтмалла?**

**Юрий А.**
Тăвай районĕ.

Ыйтăвĕсем Тăвай тăрăхĕнчен те – вĕсене хуравлама та çак **район прокурорне Оксана Ястребовăна** сĕнтĕмĕр.

– РФ Ĕçлев кодексĕн 236 статйинче çапла çирĕплетнĕ: ĕç паракан шалу, отпускшăн, çын ĕçрен кайнă май тата ытти тĕслĕхре укçа тӳлеме палăртнă вăхăта пăссан унăн асăннă тӳлевсемпе процентсемпе /укçан компенсаци/ татăлмалла. Çав процентсем РФ Тĕп банкĕн çак вăхăтра вăйра тăракан рефинансировани виçин 1/300 виçинчен кая мар пулмалла – вăхăтра татăлман виçене тĕпе хураççĕ, укçа тӳлемелли кун хыççăнхи кунран тытăнса кашни куншăн процент хушăнать. Компенсаци виçине коллектив килĕшĕвĕпе, уйрăм норма акчĕпе е ĕç килĕшĕвĕпе пысăклатма юрать. Ĕç паракан айăпĕ пур-и – пĕлтерĕшлĕ мар, çав компенсацие пур пĕр тӳлемелле. Сирĕн правасене пăснă тăк суда е район прокуратурине килмелле.

Ĕç кĕнеки пирки калас тăк – РФ Ĕçлев кодексĕн 80 статйипе килĕшӳллĕн ĕç паракан çын ыйтса çырнине тĕпе хурса ăна вăл ĕçленĕ юлашки кун ĕç кĕнекине, ĕçпе çыхăннă ытти документа памалла.

Ĕç паракан ĕçлев саккунĕсене пăссан Патшалăхăн ĕçлев инспекцийĕнчен е прокуратура органĕсенчен пулăшу ыйтмалла. Калăпăр, çын ĕçрен кайнă чух шалу тĕлĕшпе унпа туллин татăлман. Кун пек тĕслĕхсенче çын укçана суд урлă хăй тĕллĕн те, прокурор /РФ Гражданла процесс кодексĕн 45 статйин 1-мĕш пайĕпе ăна çавнашкал полномочисем панă/ тавăç тăратнипе те шыраса илме пултарать.

■ **Н.АНТИПОВ ыйтса пĕлнĕ**

## Айăплав

# 625 пин тенке яхăн – саккунсăр!

***Куславкка районĕн сучĕ 27 çулти Д.-на УК 159.2 статйин 3-мĕш пайĕпе /тӳлев илнĕ чухне улталани/ айăпласа 40 пин тенкĕлĕх штрафлама йышăннă. Приговор, тен, хаяртарах та пулатчĕ пуль, анчах суд вăл хăйĕн айăпне йышăннине, унăн пĕчĕк ачасем пуррине, кӳнĕ сиене туллин саплаштарнине шута илнĕ.***

Сиенĕ вара прокуратура курмăш тунă пулсан самай пысăк виçелĕхчĕ. Куславкка районĕн прокуратури федерацин «Ялăн 2013 çулччenхи социаллă аталанăвĕ» программине пурнăçланă чухне саккунсене пăхăннине тĕрĕсленĕ, çак ултава тăрă шыв çине кăларнă.

Янтти илĕртет вĕт – Д. асăннă программăпа килĕшӳллĕн укçа илес тенĕ. Çак тĕллевпе 2010 çулхи утă уйăхĕнче райадминистрацие хăй «Родина» ЯХПКра ĕçленине ĕнентерекен суя ĕç килĕшĕвĕ хатĕрленĕ. Чăннипе ăçта ĕçлени пирки шарламан. Çав килĕшĕве тĕпе хурса Тĕрлемес ял тăрăхĕн пуçлăхĕн хушăвĕпе ăна 624,6 пин тенкĕ тӳленĕ. Саккуна пăсса...

■ **Д.ВАСИЛЬЕВ**

КРИМ

## Суд залĕнчен

### "Укçа пар!"

***Шупашкар районĕн сучĕ ниçта та ĕçлемен, маларах та судпа айăпланнă Ильмир Абдуллинăн приговорне вуласа пачĕ. Тутарстан çамрăкĕ, 28 çултискер, Кӳкеçре йывăр преступлени тунă.***

Çаксkер Мускавран Хусана килме тухнă. «Мазда» автомобильпе Кӳкеç патĕнчен иртнĕ чух лавккаран икĕ хĕрарăм тухнине асăрханă. Кăштах укçа тăвас тенĕ – вĕсене машинăна лартнă. Хĕрарăмсенчен пĕри вунă тенкĕ тӳленĕ те кăштахран анса юлнă. Тепри малалла кайнă. Тренккасси ялĕ патне çитеспе вара водитель машинăна чарнă та пассажира мăйĕнчен ярса тытнă.

Хăраса ӳкнĕ хĕрарăм ăна аллинчен çыртса илнĕ-ха, анчах Ильмир çĕçĕ кăларнă, ăна хӳтлĕхсĕрскерĕн карланки тĕлне тытнă, укçа ыйтнă. Сехри хăпнă çын енчĕкне кăларса панă – унта 11,8 пин тенкĕ пулнă. Абдуллин çакăнпа та çырлахман: пассажирăн кĕсье телефонне те туртса илнĕ. Унăн аккумуляторне кăларса пăрахнă, хĕрарăма антарса хăварнă та малалла вĕçтернĕ.

Шар курнăскер пăтăрмах пирки çийĕнчех полицие евитленĕ. Хураха темиçе кунран тупнă, аллисене сăнчăрласа Кӳкеçе илсе килнĕ. Хăй каланă тăрăх – унăн укçа пулман-мĕн, çавăнпа хĕрарăма тапăннă. Анчах ку, паллă, яваплăхран хăтармасть. Суд патшалăх айăплавçин позицийĕпе килĕшсе Абдуллина виçĕ çул та ултă уйăхлăха пĕтĕмĕшле режимлă колоние ăсатма йышăнчĕ. Тата – вунă пин тенкĕлĕх штрафлама. Айăплав тата та хаяртарах пулатчĕ пуль те – çамрăк çынна вăл следстви вăхăтĕнче айăпне йышăнса çырса пани, хĕрарăма кӳнĕ сиене саплаштарни пулăшрĕ, приговор «çемçелчĕ».

### Урамĕ Чечеклĕ, анчах шывсăр

***Шупашкар районĕн прокуратури Кӳкеçри Чечеклĕ урамра ĕçмелли шыв тата электроэнерги çукки пирки пĕлтернĕ тĕслĕхпе тĕрĕслев ирттерчĕ.***

Асăннă урамра пурăнмалли çурт вырнаçнă, хуралтăсем те пур. Анчах централизациленĕ мелпе шыв кĕртмен, колонка тавраш те çук. Районăн тĕллевлĕ программипе килĕшӳллĕн Кӳкеç поселокне ĕçмелли паха шывпа тивĕçтерессипе çыхăннă ĕçсене 2016-2017 çулсенче пурнăçлама палăртнă. Анчах çак программăран Чечеклĕ урама шывпа тивĕçтересси паллă мар. Саккунпа килĕшӳллĕн ялхула тăрăхĕн чиккисенче халăха электричествăпа, ăшăпа, газпа, шывпа тивĕçтересси çак территори администрацийĕн татса памалли ыйтусен шутне кĕрет. Çапла вара Кӳкеç администрацийĕ Чечеклĕ урамра пурăнакансен прависемпе интересĕсене пăсни куç кĕрет.

Çакна тĕпе хурса район прокурорĕ ял тăрăхĕн администрацине асăннă урамри çынсене ĕçмелли шывпа тивĕçтерессине йĕркелеттерес тĕллевпе район судне тавăç тăратрĕ. Суд çак кунсенче йышăну туса тавăçа туллин тивĕçтерчĕ. Ăна пурнăçламалли çеç юлать.

**Анатолий ИВАНОВ,**
**Шупашкар районĕн прокурорĕн çумĕ.**

### Çынна – кислотапа!

***Çĕнĕ Шупашкар хулин сучĕ 49 çулти Тамара Калашова тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçпе приговор палăртнă. Вăл пĕлсе тăрсах çын сывлăхне йывăр сиен кӳнĕ.***

Пăтăрмах иртнĕ çулхи утă уйăхĕн варринче пулнă. Химиксен хулинчи Тĕкĕрç катинчи çуртăн коридорĕнче тĕл пулнă, хăй лайăх пĕлменпалламан арçын хĕрарăма темшĕн килĕшмен – ăна питĕнчен 70% уксус кислотипе сапнă. Çавна май арçынна йывăр суран кӳнĕ – сулахай куçĕ суккăрланмаллах.

Судра Калашова хăй çынна асăрханмасăр суран кӳнĕ теме пăхнă. Çапах патшалăх айăплавçи ĕнентерсе пама пултарнă: хĕрарăм çынна кислотапа ятарласа сапнă. Суд ăна 2 çуллăха пĕтĕмĕшле режимлă колоние ăсатма йышăннă.

**Н.СТЕПАНОВ.**

### Шалу тӳлемен

***Прокуратура органĕсем предприяти-организацире çынсене ĕç укçине вăхăтра тата туллин тӳленипе çыхăннă лару-тăрăва куçран вĕçертмеççĕ. Çавна май çулталăк пуçланнăранпа икĕ ертӳçе дисквалификацилеме те ĕлкĕрнĕ.***

Комсомольски районĕн прокуратури вырăнти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн управляющи компанийĕнче тĕрĕслев ирттернĕ. Тулли мар яваплă çак обществăра пĕлтĕрхи утă уйăхĕнчен тытăнса чӳк уйăхĕччен шалăва вăхăтра тӳлеменнине палăртнă. Директора çакнашкаллишĕн маларах та административлă майпа явап тыттарнă. Çавна май Марс Миназетдинов тĕлĕшпе КоАПăн 5.27 статйин 2-мĕш пайĕпе каллех адмпроизводство пуçарнă. Миравай судья унăн айăпне çирĕплетнĕ, ăна çулталăклăха дисквалификациленĕ.

Куславкка районĕнче вара «Карамышевское» пулă хуçалăхĕн директорĕ Юрий Афанасьев суд умне тăнă. Унта та саккуна пăснă – çынсене уйăхра шалу пĕрре çеç тӳленĕ. Çак ертӳçĕ те маларах çакнашкаллишĕнех административлă майпа явап тытнине кура суд ун тĕлĕшпе те çӳлерех асăннă йышши яваплăх палăртнă – çулталăклăх дисквалификаци.

Пĕлтĕр вара прокурорсен тĕрĕслевĕсен материалĕсене тĕпе хурса пĕтĕмпе 12 пуçлăха дисквалификациленĕччĕ. Прокуратурăсем мерăсем йышăннă май ĕç укçин 56 млн тенкĕлĕх парăмне татнă.

**Н.КОНОВАЛОВ.**

## Сăмах çерçи мар

«Пĕчĕк чухне эпĕ анне велосипед туянса патăрччĕ тесе турра кĕлĕ тăваттăм. Çитĕнсен турă кăмăлне ăнлантăм: велосипед вăрларăм та турă мана çакăншăн каçартăр тесе кĕлĕ тума пуçларăм».

*Ристан сăмахĕнчен.*

«Сенсаци! Раççей археологĕсем мамонтăн тĕрĕс-тĕкел упранса юлнă скелетне тупнă!

Сенсаци! Лондонри музейрен мамонт скелечĕ çухалнă!»

*Хыпарсен кăларăмĕнчен.*

«Больницăн инфекци уйрăмĕнчен унта варвиттипе аптранипе вырттарнă пилĕк пациент тухса тарнă. Полици тата врачсем йĕр тăрăх кайса вĕсене часах тупнă».

*Полици сводкинчен.*

«Раççейре преступниксене суд туса вĕлерессине пăрахăçланă хыççăн маларах вĕлермелли приговор палăртнисене чĕрĕллех чавса чикĕç».

*Сас-хурараn.*

«Ĕнер хулара пуçĕнчен 7 пуля лекнипе пурнăçран уйрăлнă çын виллине тупнă. Влаçсем тĕлĕнсе пĕтерейменĕç: çын хăйĕн çине алă хунă май пурнăçран çапла тискеррĕн уйрăлни халĕччен пулман».

*Хаçатри заметкăран.*

«Заложниксене ярса илнĕ террористсем хăйсен требованийĕсене каллех çемçетнĕ. Малтан вĕсем 30 млн доллар тата вертолет ыйтнă тăк халĕ пĕр кĕленче шурă эрех, 2 канфет тата велосипед та çитет теççĕ. Хăрушсăрлăх служби вĕсемпе калаçусем ирттерессине малалла тăсать».

*ФХС пĕлтерĕвĕнчен.*



## Ха-ха-ха! Ахăлтатса кулар-ха!

**Туссем калаçаççĕ:**

**– Пĕррехинче командировкăран таврăнтăм та...**

**– Малаллине каласа пама та кирлĕ мар.**

**– Мĕншĕн?**

**– Капла та пĕлетĕп. Эсĕ ăна шкапра тупрăн-и?**

**– Çук, кĕлет хыçĕнче чавса чикрĕм...**

* * *

**– Ваçук, санăн полицире паллакан çук-и?**

**– Пур-çке. Сашук – манăн питĕ лайăх юлташ.**

**– Унта мĕн тăвать?**

**– Иккĕмĕш уйăх изоляторта ларать ĕнтĕ.**

* * *

**Судья айăпланакана тĕпчет:**

**– Сире ултавшăн айăплаççĕ – хăвăрăн клиентăрсене çамрăклăх эликсирĕ тесе темле шĕвек сутнă. Эсир маларах судпа айăпланнă-и?**

**– Айăпланнă: 1650, 1730 тата 1890 çулсенче...**

* * *

**Судра.**

**– Судья господин, тупа тăватăп, манăн айăп çук!**

**– Сире маларах суд тунă-и?**

**– Унччен эпĕ нихăçан та суд умне тăман. Вăрланипе пирвайхи хут çаклантăм...**

* * *

**Пуп тĕрмене ристансен çылăхĕсене каçарттарма килнĕ. Кĕсье вăррипе калаçать:**

**– Ан кулян, ырă çыннăм! Ирĕке тухсан эпĕ сана пулăшма тăрăшăп.**

**– Тавах, атте, – хуравлать чунĕ çемçелнĕ рецидивист, – анчах эсир мана пулăшаймастăр. Çын кĕсйинчен укçа кăларса илесси – пĕртте ансат ĕç мар, кунта пысăк опыт, ăсталăх кирлĕ – эсир пултараймастăр...**

* * *

**Кĕсье вăрри автобусра кĕрнеклĕ пĕр арçын кĕсйине аллине чикет. Лешĕ çакна сисет те вăрра кăкăртан ярса тытать, кăшкăрса ярать:**

**– Мĕн хăтланатăн, кĕлмĕç?!**

**– Кам, эпĕ кĕлмĕç-и? Эсĕ хăв чухăн кĕлмĕç: санăн пиллĕкмĕш кĕсйӳне ухтаратăп – пĕр пус та çук!**

* * *

**Хупаха пĕр арçын кĕрет, бармена саккас парать:**

**– 100 грамм коньяк ярса пар.**

**Лешĕ эрех ярать те черккене клиент умне лартать. Арçын вара кĕсйинчен мензурка тата полицейски удостоверенине кăларать:**

**– Эпĕ сире тĕрĕслеме килнĕ! Виçетпĕр: 75 грамм кăна! Штраф – 2 пин тенкĕ!**

**Тепĕр каçхине. Çыннисем – çавсемех. Полицейски каллех мензуркăпа эрехе виçет, бармена ку хутĕнче 4 пин тенкĕлĕх штрафлать. Унран тĕлĕнсе çапла ыйтать:**

**– Эсĕ мана палларăн вĕт-ха, апла тăк мĕншĕн каллех сахалрах ярса патăн?**

**– Сан пек тĕрĕслевçĕсене пула алла пăсиччен темиçе пин тенкĕ штраф тӳлетĕп... – хуравлать бармен.**

* * *

**Адвокат хăй хӳтĕлекен ристан патне килнĕ:**

**– Манăн сире валли икĕ хыпар пур: пĕри лайăххи, тепри япăххи – хăшĕнчен пуçлам?**

**– Япăххинчен.**

**– Экспертиза пĕтĕмлетнĕ тăрăх – хваттерте вĕлернĕ çыннăн пиншакне вараланă юн йĕрĕсем сирĕн юнпа пĕр килеççĕ.**

**– Питĕ япăх... Лайăх хыпарĕ вара мĕнлерех?**

**– Юн кăтартăвĕсем – гемоглобин, холестерин, сахăр – пурте виçеллĕ!**

* * *

**Сейфсенчен укçа-пурлăх вăрлакансен çĕр-шывсен хушшинчи конкурсне ирттереççĕ. Условисем çапларах: командăсем икшер çынран тăраççĕ, вĕсене миллион доллар хунă сейф ларакан пӳлĕме кĕртсе яраççĕ. Пĕр минутлăха çутă сӳнтереççĕ, çак вăхăтра вăрăсем сейфа уçма ĕлкĕрчĕç тĕк – унти миллион доллара вĕсене хăйсене приз вырăнне параççĕ.**

**Малтан французсене кĕртсе яраççĕ. Çутă çутнă хыççăн çакă палăрать: вĕсем сейфăн тулашри алăкне çеç уçма ĕлкĕрнĕ иккен. Унтан – американсем. Пĕр минутра вĕсем тулашри алăка уçма, шалти кодлă çăрапа аппаланма кăна тытăннă...**

**Вырăссем патне черет çитет. Минут иртнĕ хыççăн пӳлĕмри çутта çутасшăн – çутăлмасть. Мĕн амакĕ? Тĕттĕмре сасă илтĕнет:**

**– Ваня, эпир тин çеç миллион долларлă пулса тăтăмăр. Лампочкăна вăрламасан та юратчĕ...**

* * *

**– Алло, полици-и?**

**– Полици...**

**– Эпĕ вара – Ваçук... – телефон кĕпçине пăрахать.**

**Кăштахран – каллех:**

**– Алло, полици-и?**

**– Ăхă...**

**– Эпĕ – Ваçук... – ку хутĕнче те линин тепĕр вĕçĕнче пиклетнĕ сасăсем кăна илтĕнеççĕ.**

**Темиçе минутран алăка шаккаççĕ:**

**– Ку Ваçук-и?**

**– Çапла...**

**– Эпир вара – полици!**

* * *

**Юлашки олигарх президент патне килнĕ: «Хисеплĕ президент! Хамăн завода патшалăха тавăрса патăм, хула тулашĕнчи коттеджа ача çуртне парнелерĕм, пуриншĕн те – хамшăн тата тăвансемшĕн – туллин налук тӳлерĕм. Чикĕ леш енне тухса каймашкăн ирĕк пама ыйтатăп».**

**Президент: «Халăх йăлипе килĕшӳллĕн – инçе çула тухас умĕн кăштах та пулин ларса илмеллех!»**

* * *

**Полицейскисем каçхи патруле тухнă, хăйсен территорийĕпе çӳреççĕ. Пăхаççĕ те – пĕр йывăçран çын çакăннă. Пакунлисем кунашкаллипе аппаланасшăн мар, çавăнпа вилене кӳршĕ участока куçарса çакса хураççĕ. Унта – хăйсен патрулĕ. Кăштахран çав участокри полицейскисем хайхи вилене асăрхаççĕ:**

**– Пăх-ха, паçăрхи виле каллех кунта çакăнса тăрать!**

* * *

**Клиент хăйĕн адвокачĕ панă тӳлев хутне пăхать:**

**– «Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче панă сĕнӳсемшĕн» – ку тата мĕн?**

**– Ас тумастăр-и? – тĕлĕнет адвокат. – Виçĕм кун кафере пĕрле апатлантăмăр, эпĕ сире пулă шӳрпи илмешкĕн канаш патăм...**

**Кăларăма Николай КОНОВАЛОВ хатĕрленĕ.** • **Çырăр:** Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13, «Хыпар» – КРИМ • **Шăнкăравлăр:** Тел. /8352/ 56-05-21.

## Нарăс, 23: Çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕ

# Вĕсем маншăн – ырă тĕслĕх

Çак сăн ӳкерчĕк аттен архивĕнче упранать. Ăна 1950 çулта ӳкернĕ. Унта манăн йăхăн аслăрах ӳсĕмри тăвансем сăнарланнă. Сулахайри, Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ, манăн мăн асатте – Çĕрпӳ районĕнчи Старак ялĕнче 1922 çулхи юпа уйăхĕн 17-мĕшĕнче çуралнă Герман Терентьевич Прокопьев.1920-мĕш çулсен варринче вĕсен çемйи Пушкăрт Республикинчи Пишпӳлек районĕнчи Соловьевка поселокне пурăнма куçнă. Герман Терентьевич вăрçăччен унти «Новый путь» колхозра тăрăшнă. 1942 çулхи кăрлач пуçламăшĕнче ăна çара илнĕ. Ака уйăхĕнчен Кăнтăр, Сталинград, Кăнтăр-хĕвел тухăç, 2-мĕш Беларуç, 2-мĕш Прибалтика, 1-мĕш Беларуç фрончĕсенче тăшманпа паттăррăн çапăçнă. 1-мĕш Беларуç фрончĕн гварди стрелоксен 52-мĕш артиллери полкĕн оруди наводчикĕ Г.Прокопьев сержант 1945 çулхи ака уйăхĕн 26-мĕшĕнче Берлин урамĕнчи çапăçура нимĕçсен пехота ротин атакине сирме пулăшнă. Çакăншăн ăна II степень Мухтав орденĕпе наградăланă. Унччен, 1944 çулхи çурла уйăхĕн 15-мĕшĕнче, вăл III степень Мухтав орденне тивĕçнĕ. 1968 çулта унăн кăкăрĕ çинче I степень Мухтав орденĕ ялкăшма тытăннă.



• Герман Терентьевичпа Мария Васильевна Прокопьевсем ывăлĕпе Леньăпа тата Петр Васильевич Васильев /1950 çул/.

Вăрçă хыççăн Герман Терентьевич Пишпӳлек районне таврăннă, çемье çавăрнă, ача-пăча ӳстернĕ. 1999 çулхи çĕртме уйăхĕн 30-мĕшĕнче пурнăçран уйрăлнă.

Хыçалти ретри, сержант пакунĕсемлĕ çар çынни, мăн асаттен мăшăрĕн /сылтăмри/ шăллĕ Петр Васильев. Вăл та Çĕрпӳ районĕнчи Старак ялĕнче 1925 çулта çуралнă. 1-мĕш Инçет хĕвел тухăç фрончĕн стрелоксен 95-мĕш уйрăм бригадинче яппун самурайĕсемпе çапăçнă. Авиацин кĕçĕн специалисчĕсен шкулĕнчен вĕренсе тухнă. 1950 çултанпа Шупашкарти аэроклубра ĕçленĕ, парашютистсем хатĕрленĕ. Каярахпа Шупашкарти агрегат заводĕнче, слесарьте тăрăшнă.

Çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕ умĕн вĕсем çинчен ахальтен сăмах пуçармарăм. Вĕсем – маншăн ырă тĕслĕх.

■ **Илья ВАСИЛЬЕВ,**
**Шупашкар 55-мĕш вăтам шкулĕн вĕренекенĕ**

# Мускава хӳтĕленĕ чухне

Темиçе çул каялла пирĕн пата Тутар Республикинчен саппасри старшина Павел Кумаев хăнана килчĕ. Вăл манăн аттепе пĕрле 1941 çулхи шартлама сивĕре çĕр-шывăн тĕп хулине илме талпăнакан нимĕç фашисчĕсемпе паттăррăн çапăçнă. Вĕсем Подольск хулинчи пулеметчиксемпе пехота çар училищин курсанчĕсен 11-мĕш ротин йышĕнче тăшман танкĕсем тапăнса килекен плацдарма хӳтĕленĕ. Ун чухне виçĕ салтака пĕр винтовка тивнĕ, аллисенче – çунакан шĕвек тултарнă кĕленчесем. Çакна ĕненме те йывăр, анчах... Çав çапăçусенчен пĕринче рота старшини йывăр аманнă. Атте ăна хӳтĕ вырăна илсе тухнă.

– Танксене чĕртсе çунтармалли кĕленчесем те çитместчĕç. Ун вырăнне тĕтĕмпе йăсăрланакан вутă пуленкисемпе те пенĕ. Нимĕçсем унран та питĕ хăранă, тен, шăпах вăл вут хыптарĕ. Çунакан çуртсене сӳтсе вĕсен пĕренисене тăшман танкĕсен айне пăрахаттăмăр. Гусеницăсем чăлханчăр тесе тĕрлĕ тимĕр-тăмăр, йĕплĕ пралук та ывăтнă, – аса илчĕ ун чухне хăна. – Çапăçура юлташ куçне хупсан унăн винтовкине илеттĕмĕр. Хыçалта сасса хăпартакан хатĕрсемпе «Пĕр утăм та чакмалла мар. Мускава пĕр танк та ан кĕтĕр» тесе аса илтерсех тăратчĕç. Чылайăшĕ танк айне пулса вилчĕ. Пурте тенĕ пекех 18-22 çулти каччăсем...

Аслă ăрурисем /атте те, Павăл пичче те, ыттисем те/ Тăван çĕр-шывшăн хăйсен пурнăçне шеллемен. Пысăк çухатупа килнĕ Çĕнтерӳ кунĕ. Çак чăнлăха нихăçан та ан манăр!

■ **Анатолий МАКСИМОВ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ

# Связист паттăрлăхĕ



Шупашкар районĕнчи Ахтанайра çуралса ӳснĕ Гаврил Михайлов вăрçă пуçлансан пĕрремĕш эрнерех Хĕрлĕ Çар ретне тăнă. Мускав çывăхĕнчи çар училищинчи связистсем хатĕрлекен курсра икĕ уйăх вĕреннĕ хыççăн 1942 çулхи утă уйăхĕнче вут-çулăмлă Сталинграда çитет. 62-мĕш çарăн /командующийĕ – В.И.Чуйков генерал/ 9-мĕш çыхăну ротин телефонисчĕ кĕске хушăрах штабпа подразделенисен хушшинчи çыхăнăва пĕлсе йĕркеленипе палăрать. Пĕрре кăна мар командованин Тав сăмахне тивĕçет вăл.

Юпа уйăхĕн пуçламăшĕнче Г.Михайлов сержант телефонист окопра дежурствăра тăнă. Юнашарах – боеприпассен склачĕ. Кĕçех ун çывăхĕнче тăшман снарячĕ çурăлать. Хыпса илнĕ вут-çулăм склад патне çывхарать. Г.Михайлов хăйăр сапса çулăма сӳнтерет. Хăраса, шикленсе тăмасть вăл, хăрушлăха сирет.

Сталинград фронтĕнче тухса тăнă «На разгром врага» хаçатăн 1942 çулхи юпа уйăхĕн 4-мĕшĕнчи номерĕнче «Подвиг связиста Михайлова» заметка пичетленнĕ. Сăмах май, асăннă хаçат редакторĕ пирĕн ентеш, писатель-журналист, Сталинград паттăрĕ Илпек Микулайĕ пулнă.

Вăрçă çĕнтерӳпе вĕçленичченех Гаврил Михайлович Михайлов сержант-связист фронтсен çул-йĕрĕпе утса тухнă. Хĕрлĕ Çăлтăр, Тăван çĕр-шыв вăрçин орденĕсене, «Паттăрлăхшăн» медале тивĕçнĕ.

■ **Галина МИХАЙЛОВА**

# Аслашшĕн халалне асра тытса...

***Кĕтнепе Пăла хутлăхĕнче вырнаçнă Чăваш Çармăс ялĕнче Саиновсен йăхĕнчи арçынсем пурте Тăван çĕр-шыв сыхлавçисен йышĕнче пулнă. Сашăн аслашшĕ Гурий Саинов 1941 çулхи утă уйăхĕн пуçламăшĕнчех фронта кайма повестка илнĕ, Çĕнтерӳ кунне çывхартиччен ылханнă тăшманпа кĕрешнĕ, тăван тăрăха икĕ орденпа, 5 медальпе таврăннă. «Эпир – хăравçăсем мар, чăн-чăн аптраман таврашĕсем, – тенĕ ватă салтак. – Ыттисем те Саиновсен хушаматне çӳлте тытасса, çемье чысне хушса пырасса шанатăп...»***

Çапла пулса тухнă та. Ветеранăн пил-халалне çĕре ӳкермен çамрăксем. Салтак ячĕ тухсан ывăлĕсем пĕрин хыççăн тепри шинель тăхăннă, ашшĕ çапăçусенче çĕнсе илнĕ телее сыхлама аллисене пăшал тытма шăпа тухнишĕн хĕпĕртенĕ. Акă XX ĕмĕр вĕçĕнче Петĕрĕн ывăлне Сашăна та Чăваш Çармăссен Раççей çарне чыслăн ăсатса янă, чăн-чăн салтак пулса таврăнма ырлăх-сывлăх суннă. Çар ретне тăриччен каччă Йĕпреçри пĕрремĕш вăтам шкултан ăнăçлă вĕренсе тухма, çăмăл атлетикăра спортăн пĕрремĕш разрядне тултарма ĕлкĕрнĕ. Ут-пӳ тĕлĕшĕнчен çирĕп те çăл куçĕ пек вăй-хал тапса тăракан çамрăк хăйне пурнăç шкулĕн йывăр тĕрĕслевĕ кĕтнине пĕлмен çав ун чухне!

...Республикăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен Канашри сбор пунктне пуçтарăннă çамрăксене лартнă пуйăс Мускава çул тытнă. Кунтан – Çурçĕр Кавказа. Вун саккăрти яшсем хăйсене мĕнле шăпа кĕтнине уçăмлăн ăнланса илнĕ. 1999 çулхи çу уйăхĕн 25-мĕшĕ тăван республикăпа сыв пуллашнă Александр Саиновăн асĕнче ĕмĕрлĕхех çыранса юлнă. Телее, чăваш каччи çак ушкăнра пĕччен мар иккен: кунта унăн ентешĕсем, Йĕпреç тăрăхĕнчен килнисем йышлă. Моздокра, пурнăçпа вилĕм хушшинчи хулара, хальлĕхе лăпкă-ха. Анчах ку тăвăл умĕнхи шăплăх кăна пулнине лайăх ăнланаççĕ çамрăксем. 01860-мĕш çар чаçĕнчи мотострелоксен 2-мĕш батальонне лекнĕ Александр Саинов Йĕпреç тăрăхĕнчи Кăшмасри Александр Андреевпа, Каçал енчи Виталий Матросовпа, Шупашкарпа Çĕрпӳ районĕсенчи Сергей Семеновпа тата Слава Мироновпа çывăх туслашнă. Сăмах май, халĕччене тăсăлать çак туслăх. Водитель-механик профессине алла илнĕ Чăваш Çармăс каччи, салтаксем валли апат-çимĕç турттараканскер, малтанхи кунсенче боевиксемпе куçа-куçăн тĕл пулман-ха. Анчах нумай кĕттермен лешсем. Аргун ту хушăкĕнчен тухса пирĕн салтаксене пĕр хутчен кăна мар тапăннă. Вырăнти лару-тăрăва пилĕк пӳрне пекех витĕр пĕлсе-курса тăракан сĕмсĕр боевиксем лартса хăварнă мина çине кĕрсе кайса сывлăшалла сирпĕннĕ салтаксенчен пĕри Сашăн çывăх тусĕ, Чăваш Çармăсран 5 çухрăмра вырнаçнă Смычка каччи Анатолий Никитин пулнă. «Вăрçă мĕн таран пысăк çухату кӳнине Толя вилнĕ хыççăн пĕтĕм чун-чĕрепе туйса илтĕм, – çак сăмахсем хыççăн Саинов сăн-пичĕ шурса кайнине асăрхарăм эпĕ. – 2000 çулхи пуш уйăхĕн 10-мĕшĕнче, тăван тăрăхран уйрăлнăранпа 10 уйăх иртсен, тантăшăма цинк тупăкра тăван ялне илсе килтĕмĕр. Ăна юлашки çула ăсатма Кăшмас каччи Александр Андреев та хутшăнчĕ. Моздокран килнĕ Владимир Манжинов лейтенантпа пĕрле хурлăхлă митингра эпĕ те сăмах каларăм, Толя вилĕмĕшĕн боевиксене тавăрма пулни çинчен пĕлтертĕм».

Александр Саинов та, унăн тантăшĕсем те хăйсен тивĕçне чун-чĕри хушнă пек пурнăçланă, кашни тытăçуран хăюллăн çĕнтерсе тухнă. Шел, Çурçĕр Кавказа пĕрле çул тытнă ентешĕсенчен темиçе çамрăка Анатолий Никитинăн шăпи кĕтсе тăнă-мĕн. «Вăхăтсăр пуç хунă тантăшăмсем куç умĕнчех, – терĕ Александр Саинов. – Буинск поселокĕнчи Владимир Ягодинские, Йĕпреçри Станислав Павлова снайпер пульли пирĕнтен уйăрчĕ. Кăшт маларах сĕм вăрман варринче вырнаçнă Пăкăян поселокĕнчи Судаковсен килне те цинк тупăк илсе çитнĕччĕ. Ветеринари врачĕ пулас ĕмĕтпе çунатланнă Сергей тăван ял масарĕнче канлĕх тупрĕ...»

Хальхи вăхăтра Александр Саинов Мускав хулине ĕçлеме çӳрет. Тăван тăрăхри предприятисем пурте тенĕ пекех хупăннă. Тĕп хулари ведомство хуралĕнче ун валли ĕç пур-ха хальлĕхе. Пиччĕшĕ хăйĕнпе пĕрле шăллĕне Ромăна илсе кайнă. Рома, салтака кайма ят тухсан, тăнăçлăх кӳрекен /миротворец/ çар чаçне лекнĕ. Çакăн хыççăн Грузи çĕршывĕнчи хирĕç-тăрусене сирсе яма, Цхинвал хулинче пурăнакансене хӳтлĕх кӳме хутшăннă. Саиновсен хушамачĕ ятне тасан упранă. Аслашшĕ, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче Европăри патшалăхсене фашизмран ирĕке кăларма тивĕçлĕ тӳпе хывнă хăюллă фронтовик, паян кунччен пурăнас тăк, маттур мăнукĕсене ытамласа илсе çапла каланă пулĕччĕ: «Эсир манăн пил-халалăма тӳрре кăлартăр!»

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ.**
Йĕпреç районĕ

Уйăхлăх

# Савăнăçпа куляну туйăмĕ вăратакан уяв



*Ыран – Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕ. 1918 çулхи нарăсăн 23-мĕшĕнче çуралнă паллă çак пулăма халалласа çĕр-шыври общество организацийĕсем çур ĕмĕр ытла ĕнтĕ ятарлă уйăхлăх ирттереççĕ. Кăçалхи çак кампани вĕçленеспе кашни хула-районтах, çавăн пекех чылай коллективра Совет Союзĕн çарĕсене Афганистанран илсе тухнăранпа 25 çул çитнине анлăн паллă турĕç.*

Вунă çула яхăн тăсăлнă Афган вăрçине Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕк ялĕнче çуралса ӳснĕ 24 салтак тата Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ летчикĕ, Паттăрлăх тата Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсен кавалерĕ Иван Теньков подполковник хутшăннă. Вăрçăпа юнлă хирĕç тăрусем çухатусăр вĕçленмеççĕ. Вăтăр çула яхăн каялла сăрт-ту хушшинчи хаяр çапăçура Анатолий Патшин пуçне хунă. Унăн юлташĕсенчен улттăшĕ вара Аслă Елчĕке аманса таврăннă хыççăн мирлĕ вăхăтра вилнĕ. Вĕсене ялти халăх нихăçан та манмасть.

Çак кунсенче Аслă Елчĕкри тĕп лапамри стадионта интернационалист салтаксене асăнса хоккей турнирне ирттерчĕç. Ăна йĕркелес тĕлĕшпе Анатолий Патшинпа пĕр вăхăтра Г.Н.Волков академик ячĕллĕ шкулта вĕреннĕ Виталий Орехов агрономпа физкультура учителĕ Виталий Афанасьев пысăк ĕç туса ирттернĕ. Вĕсем хатĕрленĕ «Спутник» команда татăклă тĕл пулура Тускел ялĕн хоккеисчĕсене 6:0 шутпа çĕнтернĕ. Виççĕмĕш вырăнта – «Прогресс» пĕрлешӳ команди.

Çитĕнекен ăрăва çарпа патриот воспитанийĕ парас тĕлĕшпе Шупашкарти Н.В.Никольский ячĕллĕ педагогика колледжĕнче тĕллевлĕ вăй хураççĕ. Çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунне халалласа ирттернĕ уйăхлăх вăхăтĕнче кунта кашни эрнерех спорт ăмăртăвĕ, конкурспа викторина йĕркелерĕç. Иртнĕ юн кун педагогика колледжĕнче ирттернĕ Паттăрлăх урокне Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсем – ултă орден кавалерĕ Петр Теплов тата «Советская Чувашия» хаçатăн корреспонденчĕнче 30 çул ытла ĕçленĕ Петр Кольцов, 1962 тата 1967 çулсенче тĕрлĕ çĕр-шывра пулса иртнĕ çар конфликчĕсене хутшăннă Федор Пупин майор, çавăн пекех интернационалист салтаксем хутшăнчĕç. Паттăрлăх урокĕ çарпа патриот юррисен концерчĕпе вĕçленчĕ.

■ **Петр СИДОРОВ.**

Алена АБЗЫКОВА сăн ӳкерчĕкĕ

# Асăну урокĕ

***Çак кунсенче Канаш районĕнчи Шуркасси вăтам шкулĕнче хамăр çарсене Афганистанран илсе тухнăранпа 25 çул çитнине халалласа ас тăвăм урокĕ иртрĕ.***

Ку мероприятие шкул коллективĕ тата сумлă хăнасем – Канаш райадминистраци пуçлăхĕ В.Софронов, Кăшнаруй ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.Васильева, Раççей вăрçă тата çар службин ветеранĕсен союзĕн республикăри организацийĕн ертӳçин çумĕ, отставкăри майор В.Константинов, "Вăрçă инваличĕсем" общество организацийĕн правлени членĕ Ю.Гурьев, афган вăрçине пулнисем – хутшăнчĕç. Афганистанри çапăçусенче чăваш каччисем те паттăрлăх кăтартнă, шел, вĕсенчен хăшĕ-пĕри тăван тăрăха чĕрĕ-сывă таврăнайман. Пуç хунисен йышĕнче Кăшнаруй ял тăрăхне кĕрекен Тури Сурăм çамрăкĕ А.Семенов та пур. Ас тăвăм урокне унăн иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕ В.Николаев килнĕ, ăна "Вилнĕ салтакăн çемйине" медаль пачĕç. Ю.Гурьев "афганецсене" – В.Николаева, А.Петрова, О.Александрова тата ыттисене – Тав çырăвĕпе чысларĕ.

Райадминистраци пуçлăхĕ В.Софронов ас тăвăм урокĕсем пысăк пĕлтерĕшлине асăнчĕ. Çамрăксене çарпа патриот воспитанийĕ панăшăн шкул коллективне тав турĕ. Ку пĕлӳ çуртĕнче ăс пухакансем "Зарница" тата "Орленок" вăййасене пĕрмаях хутшăннине, çĕнтерӳçĕсен йышне лекнине палăртрĕ. "Интернационалист воинсене асăнса Канаш районĕнче çулсеренех спорт ăмăртăвĕсем, ытти мероприяти ирттереççĕ, палăксемпе асăну хăмисем уçаççĕ. Сирĕн шкулта та А.Семенов ячĕпе асăну хăми çирĕплетнĕ", – терĕ Владислав Васильевич.

"Ку тĕл пулу – сирĕн аçăрсемпе аслаçăрсене, кукаçăрсене, тăванăрсемпе çывăх çыннăрсене – салтак тивĕçне чыслăн пурнăçланисене – асăнса йĕркеленĕ урок", – терĕ мероприятие вĕçленĕ май шкул директорĕ Г.Петрова.

■ **Антонина ТЯМИНА**

# Александр Николаевич НИКОЛАЕВ-АСЛУТ



Ун çинчен иртнĕ вăхăтпа калаçма питĕ йывăр, «вăл вилнĕ» текен хăрушă хыпар чĕремĕрсене арман чулĕ пек пусарса тăрать. Ăна пĕлнĕ, унпа пĕрле ĕçленĕ тусĕсемпе юлташĕсемшĕн, ахаль çынсемпе «Хыпар» хаçата çырăнса илекенсемшĕн пысăк хурлăх – нарăсăн 20-мĕшĕнче паллă журналист, сумлă писатель Александр Николаев-Аслут пурнăçран уйрăлса кайрĕ. Республикăра ăна палламан, пултарулăхĕ пĕлмен çын çук-тăр. Яланах халăхпа тата халăхшăн тăрăшатчĕ, çирĕп, уçă чунлăччĕ, тĕрĕслĕхшĕн çунатчĕ, тĕрĕс марлăха, суеçĕ-элекçĕсене чăтма пултараймастчĕ. Çаплаччĕ пирĕн хисеплĕ ĕçтешĕмĕр-юлташăмăр.

Александр Николаевич 1930 çулхи раштавăн 22-мĕшĕнче Канаш районĕнчи Ешкилт ялĕнче çуралнă. Пурнăç йывăрлăхне пăрăнмасăр малашлăха талпăнакан чун-чĕреллĕ çамрăк Чурачăкри вăтам шкултан, куçăн мар майпа КПСС Тĕп Комитечĕ çумĕнчи партин аслă шкулĕн журналистика уйрăмĕнчен вĕренсе тухнă. Тăван хуçалăх уй-хирĕнче лăш курмасăр вăй хунă, Хусан чукун çулĕн рабочийĕнче тăрăшнă. 1951-1954 çулсенче Совет Çарĕнче хĕсметре тăнă.

КПСС Чурачăк райкомĕнче пуçарулăхпа, хастарлăхпа палăрнă Александр Николаева кĕçех республикăри «Коммунизм ялавĕ» /халĕ «Хыпар»/ хаçата чĕнсе илнĕ, чылай çул явапла пайсене ертсе пынă. Чăваш Республикин телекуравпа радиохыпарлав патшалăх комитетĕнче тĕп редакторта, 1996-1999 çулсенче Чăваш Ен Патшалăх Канашĕн Аппаратĕнче тĕп специалистра тăрăшнă.

Александр Аслут – публицист, куçаруçă, сăвăç тата прозаик. 1998 çултанпа – Раççей Писателĕсен союзĕн членĕ. Чылай повеç-калав, очерк авторĕ. Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Ăна Халăхсен туслăхĕн орденĕпе, чылай медальпе наградăланă.

А.Н.Николаев-Аслут вилĕмĕ «Хыпаршăн» та, чăваш литературишĕн пысăк çухату. Çутă сăнару, хаклă çыннăмăр, пирĕн асрах упранĕ.

**«Хыпар» Издательство çурчĕн коллективĕ.**

Чăваш Республикин Журналистсен пĕрлĕхĕ РФ Журналистсен союзĕн членĕ, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ

**Александр Николаевич НИКОЛАЕВ /АСЛУТ/**

вилнĕ пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле хурланнине пĕлтерет.

ЧР Профессионал писательсен пĕрлĕхĕ ЧР Профессионал писательсен союзĕн членĕ

**Александр Николаевич АСЛУТ**

вилнĕ пирки тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланнине пĕлтерет.

# Çĕр-шыв хӳтĕлевĕнче те, йĕркелĕх хуралĕнче те

***«Пирĕн пысăк йышра кăкăр çине Хĕрлĕ Çăлтăр орденне çакма тивĕçнĕ çын пур. Милицире тахçантанпах службăра. Тӳрĕ кăмăллă, хушнине тĕрĕс те вăхăтра пурнăçлакан, опытлă ĕçчен. Яланах яваплăха туять», – ĕçтешне мухтанăччĕ шалти ĕçсен Вăрнар районĕнчи пайĕн штаб пуçлăхĕ, шалти служба подполковникĕ Ярослав Никифоров пĕр калаçура.***

Сергей Кузьмич Степанов аслă эксперт-криминалист, полици майорĕ пĕлтĕр пенсие тухрĕ, полици ветеранĕсен йышне кĕчĕ. Шăпах вĕсем В.Синдячкин техник-криминалистпа пĕрле çивĕч ĕçленĕрен кăткăс чылай преступление уçса панă.

Çӳлерех асăннă орден патне каялла таврăнар-ха. Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ пĕлтерĕшĕпе патшалăхра виççĕмĕш шутланнă. С.Степанова унпа çамрăклах, çар хĕсметĕнче тăнă вăхăтрах, чысланă.

Санарпуçĕнче çуралса ӳснĕ, ялти шкултан, Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕнчен вĕренсе тухнă çамрăка 1985 çулхи çуркунне салтака кайма ят тухнă. Çар ретне тăнăскер малтанах Литвара вĕренӳре пулать, унтан Афган вăрçине лекет. Тăван тăрăхра ветеринар профессине алла илнĕскере кунта санинструктора вĕрентеççĕ. «Лайăх ас тăватăп: чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕнче эпир засадăна кайрăмăр. Душмансен уйрăмах праçник кунĕсенче хăйсене «кăтартма» юрататчĕç. Эпир вăрттăн вырăна вырнаçрăмăр. Кăнтăрла шăп-шăпăрт, апат пĕçерсе çирĕмĕр. Эпĕ йĕри-тавра питĕ лăпкă пулнинчен тĕлĕнетĕп, хăрушах мар-ха тесе шухăшлатăп. Анчах кас пулчĕ те... пуçланчĕ: хирехирĕçле икĕ ушкăн пĕр-пĕрне чарăнмасăр перет. Эпир, вĕсен варринче юлнăскерсем, хамăр пуррине пĕлтермесĕр шăпăрт ларатпăр. Пĕрремĕш хут курнă çак хирĕç тăруран маншăн чăн-чăн вăрçă пуçланчĕ», – аса илет халĕ полицин отставкăри майорĕ.



*• С.Степанов.*

Малалла вара – сăрт-ту хушшинчи çапăçусем, аманнă салтаксем, тус-юлташ, афган халăхĕн ирĕклĕхĕшĕн пуç хунă çынсем... Çакнашкал ӳкерчĕк куç умĕнчен пачах таталман – аманнисене пĕрремĕш медицина пулăшăвĕ парса вилĕмрен çăлса хăварасси Степанов санинструкторăн тивĕçĕ пулнă-çке: вăл сурансене çыхса янă, палкаса юхакан юна чарнă, укол туса ыратнине çăмăллатнă...

1986 çулхи раштав уйăхĕн 24-мĕшĕнче вĕсен роти душмансен засадине лекнĕ. Нумаййăн аманнă, чылайăшне «çулăм» ăшĕнчен илсе тухса сиплеме май килнĕ. Тăшман пульли Сергей Степанова хăйне те ураран амантнă. Баграм хулинчи госпитальте тăна кĕнĕ вăл. Пĕр уйăх сипленнĕ хыççăн каялла таврăннă, анчах текех хăйĕн ротипе çӳреймен, ту çинчи çулсене сыхланă, хамăр колоннăсем йĕркеллĕ иртсе каяссине тивĕçтернĕ. Шăпах юнлă çапăçура паттăрлăх кăтартнăшăн, салтаксене вилĕмрен çăлса хăварнăшăн Санарпуç çамрăкне Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă. Çавăн пекех вăл «Тав тăвакан афган халăхĕнчен» медале тата ытти наградăна тивĕçнĕ.

Салтак тумне хывнă каччă пĕр вăхăт Калининăри 24-мĕш училищĕре ĕçленĕ, каярахпа Элĕкри ПАИ инспекторне вырнаçнă. Тепĕр çултанах пултарулă çамрăка административлă практика инспекторĕн должноçне шаннă, кĕçĕн лейтенант званине панă. Ялти ашшĕ-амăшне ватлăхра пулăшас тени, вĕсемпе çывăхрах пулас кăмăл-туртăм Сергей Кузьмича тăван районалла куçма хистенĕ. Вăрнарти автоинспекцире çулталăк вăй хунă хыççăн 2002 çулта ăна эксперт-криминалиста куçараççĕ. Йывăрлăхсенчен нихăçан та хăраманскер çĕнĕ профессие хăвăртах хăнăхнă, Шупашкарти экспертизăпа криминалистика центрĕнче тата Мускавра куçăн мар майпа вĕреннĕ.

С.Степанов экспертизăпа криминалистика центрĕн районсен хушшинчи Çĕмĕрлере вырнаçнă уйрăмĕн аслă эксперт-криминалисчĕ пулнă май Вăрнар тата Элĕк районĕсенчи киревсĕр ĕçсене уçса пама хутшăннă. Çак тапхăрта миçе преступление тăрă шыв çине кăларман пулĕ?!

Йĕркелĕх хуралĕнче тăраканăн ĕçĕ кăткăс, кану кунĕсем те çукпа пĕрех, пысăк чăтăмлăх кирлĕ. Çавăнпа чи пĕлтерĕшли – çемье тылĕ çирĕп пулни, килте ăнланулăх хуçаланни. С.Степанова та пурнăçра хавхалантарса пыраканĕ, пулăшаканĕ – мăшăрĕ Людмила Ивановна. Вăл чылай çул Калининăри «Светлячок» ача садĕнче тăрăшать. Степановсем пĕр ывăл çуратса ӳстернĕ, халĕ Алеша программиста ĕçлет.

■ **Ирина ЯКОВЛЕВА.**

Автор сăн ӳкерчĕкĕ

# Паян «Чăваш хěрарăмě» хаçатăн çěнě номерě пичетленсе тухрě

Администрация Асхвинского сельского поселения Канашского р-на ЧР предоставляет в аренду сроком на 49 лет земельный участок площадью 957000+/-8560 кв.м с кадастровым номером 21:11:000000:2910, расположенный по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Канашский район, с/пос. Асхвинское, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала, для сельскохозяйственного производства.

Заявления принимаются в течение месяца со дня опубликования по адресу: 429306, Чувашская Республика, Канашский район, д. Б.Бикшихи, ул. Ленина, д.11а. Телефон для справок 8(83533) 60-6-17.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**93.Земельный участок** со свидетельством под ИЖС площадью не менее 40 соток, можно с ветхими постройками в Чебоксарском, Моргаушском районах. Посреднику за информацию, если сделка состоится, 2000 руб. Т. 8-927-668-03-46.

**104.Бычков, коров, тёлок, овец,** свиноматок. Т. 8-927-999-37-37.

**587.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

## РАБОТА

**97.Требуются рабочие** на монолит. Вахта. Оплата своевременная. Т. 8-917-677-42-98.

**100.Требуются монолитчики.** Т. 8-927-667-82-72.

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

## УСЛУГИ

**25.Установка забора** из профлиста, сетки-рабицы, секции ворот /распашные, откатные, автоматика/. Гарантия. Тел. 8-917-651-80-57.

**32.Наркология. Живите трезво!** Анонимно. Консультация бесплатно. С 8 до 13 ч. А.: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.** Лиц. ЛО 2101000928 МЗ СР РФ от 13.09.13 г. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение** колодцев: скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**96.Православный экстрасенс.** Т. 8-987-660-39-29.

**99.Автоматические ворота, видеонаблюдение.** Т. 89278636398.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и доставка** ж/б колец. Т. 8-905-343-42-07.

## СУТАТĂП

**795.**Лайăх кěрекен **таптарнă çăм.** Т. 8917066414б.

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пěлтерў
Тел.: 28-83-70.
316-мěш пўлěмре йышăнаççě.

## ПРОДАЮ

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.excomfort.ru. Т.: 46-55-44, 89538998224.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Доставка. Замер. Без выходных. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х-20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7. СРУБЫ** для бани. Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 444433.

**15.Кирпич,** брусчатку, кольца, ОПГС, песок, КБ. **Т. 89613393363.**

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок, щебень,** торф, кирп. бой. Т. 89033225766.

**20.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ОКНА** пластиковые, железные **ДВЕРИ**. Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.Керамблоки** 20х20х40, 12х20х40, 10х20х40, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, к/кольца. Доставка. Т. 89033468556.

**30.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, двери** стальные, межкомнатные. Низкие цены. Гарантия качества. Звоните. Тел. 8-937-954-92-45.

**33.Гравмассу,** песок, **керамзит, щебень, торф.** Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дёшево. **Т. 89373866629.**

**38.ПЛИТЫ тротуарные** 400х400х50 – 420 руб./кв.м., 500х500х60 – 450 руб./кв.м. **Зимой дешевле.** Т. 89674702736.

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 89370100141.

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозём, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 89053447932.

**52.Пластиковые ОКНА,** железные **ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

**53.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: /8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**61.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы** кованые. Т. 89276689587.

## Саламлатпăр



***Хаклăран та хаклă, юратнă мăшăра, аттене, асаттене, мăн асаттене, Тăван çěр-шывăн Аслă вăрçин ветеранне – Канаш районěнчи Шаккăл ялěнче пурăнакан <u>Михаил Прокопьевич ПРОКОПЬЕВА</u> – 90 çулхи сумлă юбилейпе чун-чěререн саламлатпăр. Вăрăм кун-çул, çемьере юратупа килěшў, ачусемпе мăнукусенчен пархатарлăх сунатпăр.***

*Çулсем иртни ан кўтěр тунсăх,*
*Вăй-халу пултăр иксěлми.*
*Сана сунатпăр çирěп сывлăх*
*Тата телей ытам тулли.*

***<u>Мăшăрě Луиза Васильевна, ывăлě, мăнукěсем, мăнукěсен ачисем, çывăх тăванěсем.</u>***

* * *



***Хаклă та юратнă çыннăмăра – Етěрне районěнчи Анат Мучар ялěнче çуралса ўснě, халě Етěрне хулинче пурăнакан <u>Владимир Петрович МАЛОВА</u> – 75 çулхи юбилейпе саламлатпăр. Пурнăçăн анлă çулěпе малашне те хастаррăн утма çирěп сывлăх, пархатарлă кун-çул, çăл куç пек тапакан вăй-хал сунатпăр.***

***<u>Юратнă мăшăрě, ачисем, мăнукěсем, кěçěн мăнукě, тăванěсем.</u>***

* * *

***Хаклă та юратнă аппана – Канаш районěнчи Шăхаль ялěнче пурăнакан <u>Римма Ивановна ВАСИЛЬЕВĂНА</u> – 70 çулхи юбилейěпе ăшшăн саламлатпăр. Чăваш юманě пек çирěп сывлăх, иксěлми вăй-хал, тулли телей, такăр кун-çул сунатпăр.***

***<u>Çывăх çыннисемпе тăванěсем.</u>***

ИЗВЕЩЕНИЕ

Администрация Батыревского района Чувашской Республики сообщает о наличии земельного участка сельскохозяйственного назначения для ведения сельскохозяйственного производства для предоставления в аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:110301:72, площадью 58695 кв.м., местоположение: установлено относительно ориентира в северо-западной части кадастрового квартала 21:08:110301, расположенного в границах участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Батыревский район, Туруновское сельское поселение.

За справками, информациями, претензиями обращаться в отдел сельского хозяйства, экологии, экономики, земельных и имущественных отношений администрации Батыревского района Чувашской Республики в течение месяца со дня опубликования в газете. Дополнительная информация по тел. 8(83532) 6-18-37, 8(83532) 6-14-26.

## ПРОДАЮ

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** любой, **срубы** в наличии и на заказ, **дрова,** горбыль. Т. 8-903-389-14-00.

**74.КамАЗ – сельхозвариант.** Т. 8-937-952-84-67.

**75. Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 8-937-952-84-67, Владимир.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**88.<u>Грабли</u>** <u>от 23 тыс. руб.,</u> **<u>плуги, картофелесажалки,</u>** <u>фрезы,</u> **<u>косилки.</u>** Низкие цены. Всё новое! Тел.: 8-927-851-68-58, 8-937-955-98-02.

**89.Срубы** /3х3, 6х3/ – готовые и на заказ. Строим под ключ. Т. 8-909-300-31-21.

**103.Кирпич, керамблок, кольца колодезные.** Высокое качество. Низкие цены. Т. 89623213680.

**107.Пластиковые окна,** деревянные. Немецкое качество. Бесплатные услуги: замер, доставка, демонтаж, монтаж. **Гарантия** 5 лет. Пенсионерам **скидки.** Т.: 8/8352/ 377017, 89373913991.

**111.К/корм,** зерно, ракушки, **мясокостную муку** и т. д. Доставка по ЧР бесплатно. Т. 89003343380.

**114.Дом крупнопанельный 70 кв. м.** с надв. постройками, баня, газ, уч. 30 сот. /Марпосадский р-н, д. Астакасы. /. Т. 89053429852.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые **окна**, железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**119.Пиломатериал** любой от производителя, **утеплители,** крепежные изд., гидропароизоляция. НДС. Т.: 37-69-01, 44-04-47.

**120.СЕМЕНА ДОННИКА** белого и желтого. Т. 89053459424.

**121.Песок, гравмассу,** бой кирпича, **щебень.** Т. 89196567752.

**851.Кирпич, кольца.** Д-ка /вездеход манипулятор/. Т. 444407.

# Вăрçă паттăрĕн А.Кочетов ентешĕмĕрĕн мăнукĕн хĕрĕ

# Аделина Сотникова – Олимп чемпионки!



*Сочире иртекен хĕллехи XXII Олимп вăййисем вĕçленсе пыраççĕ. Унăн программипе олимпиецсем паян тата ыран юлашки стартсене тухĕç.*

Шăмат кунхи кĕрешӳре çичĕ ылтăн медаль хăйсен "хуçисене" тупĕ, тепĕр кун унтан та сахалтарах – виççĕ кăна. Олимпиада хупăннă кун, нарăсăн 23-мĕшĕнче, арçын йĕлтĕрçĕсем 50 километрлă марафонта тупăшĕç, бобслеистсем тăватшарăн пĕр экипажра ăмăртĕç. Тата тĕнчери миллион-миллион çын кăмăллакан вăййра – хоккейра – финалистсем тĕл пулĕç. Вĕсем ĕнер каçхине кăна паларĕ: çурма финалта Финлянди командипе Швеци командипе вылянă, АПШ хоккеисчĕсем – канадецсемпе. Шел, Раççей командисем – хĕрарăмсемпе арçынсен – вăйлисемпе пĕр тан кĕрешеймерĕç.

Юрать-ха фигуристсем, шорт-трекра ăмăртакансем, бобслеистсем тата ытти хăш-пĕр çĕнтерӳçĕ пурсăмăр та шаннине тӳрре кăларма вăй-хăват çитерчĕç. Еплерех маттур та ăста пулчĕ кĕçнерни кун фигуристсем туса ярăнакан Аделина Сотникова! Вун çиччĕри "ылтăн" хĕре куракансем чун-чĕререн, ăшшăн саламласа чысларĕç. Сотниковăн ылтăн медалĕ Раççей олимпиецĕсемшĕн – çиччĕмĕш.

Сăмах май, А.Сотникова – Улатăрта çуралса ӳснĕ, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче Совет Союзĕн Паттăрĕн ятне тивĕçнĕ А.Кочетовăн мăнукĕн хĕрĕ. Паянхи кун унăн иккĕмĕш сыпăкри мăн аккăшĕ – Любовь Федотова – Улатăрта пурăнать.

Çак кăтартупа пирĕн çĕр-шыв пĕтĕмĕшле таблицăра тăваттăмĕш вырăна тухрĕ. Малтисем – Норвеги /10 ылтăн медаль/, АПШ /8/, Германи /8/. Тен, ăнăçлă финиш Раççее кăшт çӳлерех хăпарма май парĕ.

**Юрий ПЛОТНИКОВ**

# Тава тивĕçлĕ тренер

***Çĕнĕ Шупашкарти 1-мĕш спорт шкулĕнче ĕçлекен Николай Петров хăйĕн пурнăçне спорта халалланă. Нумаях пулмасть 60 çулхи юбилейне паллă тунă пуçтарулла вĕрентекен «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тренерĕ» ята тивĕçрĕ.***

Чăннипех тивĕçлĕ вăл çак хисепе. Унăн вĕренекенĕ Анастасия Тарасова 2013 çулта виçĕ çĕнтерӳпе палăрчĕ: Дзержинск хулинче сумо енĕпе иртнĕ çĕр-шыв ăмăртăвĕнче, Раççей тата тĕнче кĕрешӳçисен чемпионачĕсенче мала тухнă. Тепĕр воспитанникĕ Елена Карпова /Васильева/ бронза медаль çĕнсе илнĕ. Тренер патĕнче ăсталăха ӳстерекен ытти çамрăк та маттур. Калăпăр: иртнĕ çулах Николай Жигарева Денис Петров Пĕтĕм Раççейри турнирта пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăнсене йышăннă. Сергей Андреев, Эдуард Иванов, Сергей Орлов самбо енĕпе Раççей спорт мастерĕн нормативне тултарнă, вĕсем те чылай ăмăрту призерĕсем.

Николай Николаевич Куславкка районĕнчи Йĕршер ялĕнче çуралса ӳснĕ. Тĕрлемесри шкулта пĕлӳ илнĕ чухнех районти турнирсенче хăйĕн вăйне тĕрĕсленĕ яш малаллахи кун-çулне те спортпа çыхăнтарать. Шупашкарти профессипе техника училищине вĕренме кĕрсен ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсен секцине çырăнать. Каярах ăна шăпа Чăваш патшалăх педагогика институтне илсе çитерет. Унта спортсмена Евгений Селиванов /хальхи вăхăтра – ЧР самбо федерацийĕн ертӳçи/ асăрхать, ăна вăл секцине пыма сĕнет. Çавăнтан пуçласа çамрăк спортсмен республика тата çĕр-шыв ăмăртăвĕсене хутшăнать, самбистсен Пĕтĕм Раççейри турнирĕсенче çĕнтерӳçĕ ятне икĕ хут тивĕçет. Паян СССР спорт мастерĕ тренер ĕçĕнче вăй хурать, вăл самбистсемпе дзюдоистсене, кĕрешӳçĕсемпе сумоистсене хатĕрлет.

Хăйĕн ĕçне чунтан парăннă Николай Петрова республикăра кĕрешӳ тата сумо енĕпе уйрăм секцисем уççин канăç памасть. «Чăваш Ен спортсменĕсен пысăк çитĕнĕвĕсемпе мухтанатпăр, анчах вĕсене малалла аталанма майсем туса памаççĕ. Çавăнпа секцисем кирлех. Тен, хăçан та пулин кĕтсе илетпĕрех», – шанăçне çухатмасть тренер.

**Егор АНДРЕЕВ**

## *Мĕншĕн çапла калатпăр*

# Килсен те лайăх, килмесен тата лайăх

Упăшкипе арăмĕ юратса мăшăрланнăранпа çирĕм пилĕк çул çитнине паллă тума шут тытаççĕ, кама-кама чĕнмеллине палăртаççĕ.

– Эпĕ халех юбилей епле иртсе каясси пирки пăшăрханатăп. Халĕ, хăв пĕлетĕн, – тет арăмĕ мăшăрне, – пĕр ĕçкĕ те йĕркеллĕ иртни çук, кăмăллăн кăна шăкăл-шăкăл калаçса ларас чухне ĕçсе супнăскерсем пĕр-пĕрне кӳрентерме, усаллине аса илме, хирĕçлеме пуçлаççĕ. Куля кумпа Мишша тете те ав ялан хирĕççе пурăнаççĕ: тем çитмест, тем пайлаймаççĕ, урлă пулаççĕ каллех, шăл витĕр калаçсаран хăрааса тăратăп.

– Пурте хирĕçмеççĕ вĕт, иккĕшĕ кăна мар, чаракансем те пулĕç. Чĕнмесен аван мар, шута хуман пек пулĕ. Ăсĕсем хăйсен, чĕнсе пăхар. Килсен те лайăх, килмесен тата лайăх, – килĕшет мăшăрĕ.

Пĕрене пуçĕ шăтăк тенешкел – ачи те çавăнтах ашшĕпе амăшĕ калаçнине пĕтĕмпех итлесе ларнăмĕн. Хайхи çак шăпăрлана Мишша тетĕшĕ патне йыхрава яраççĕ. Ачи ун патне çитет те: "Сире аттепе анне юбилее чĕнме ячĕç, кĕтетпĕр терĕç", – хыпарлать ача.

– Урăх нимĕн те каламарĕç-и? – ыйтать инкĕшĕ.

Ача ачах çав, суйма-пытарма пĕлменскер çапла лаплаттарса хурать: "Килсен те лайăх, килмесен тата лайăх", – терĕç".

Паллах, Мишша тетĕшĕпе инкĕшĕн кун пек чухне кăмăл хуçăлать: чĕннĕ çĕре те каймалла, те каймалла та мар.

Юратсах кайман çыннăн кăмăлне пăсас мар тесе хăйсен асĕнче çапла калама хăнăхнă.

**Роман ЧЕПУНОВ**

# Гороскоп

***Нарăс, 24 - пуш, 2***



**Сурăх.** Пултарулăхăра кăтартмалли чи ăнăçлă тапхăр. Нарăсăн 28-мĕшĕ – савăнăçлă кун: ĕçре преми парассине пĕлтерĕç, кăсăклă хыпар илтĕр. Вырсарни кун юлташăрсене хăнана чĕнетĕр пулин те ытлашши ан тăкакланăр.



**Вăкăр.** Пурнăçри улшăнусем пăшăрхантарĕç: çăвара шыв сыпмасан вăрттăнлăхăрсем пирки çывăх çыннăрсем кăна мар, ĕçтешĕрсем те пĕлĕç. Унсăр пуçне шухăшламантуман çĕртех тăкакланма тивĕ /ытлари кун/. Эрне кун – ăнăçсăр кун: юратнă çыннăра кĕвĕçмелли сăлтав тупăнĕ.



**Йĕкĕреш.** Çивĕч ыйтусене татса пама ан васкăр. Эрнен иккĕмĕш çурринче вĕсем çăмăллăнах уçăмланĕç – хăвăр та сисместĕр. Сывлăхăр пирки ан манăр: терапевт патне кĕрсе тухăр, стоматологпа канашлăр... Руль умĕнче ларакансене çăлтăрсем асăрханулăрах пулма хистеççĕ.



**Рак.** Командировкăна кайса килни карьера картлашкипе хăпарма пулăшĕ. Çапах сирĕн çул çинче чăрмавсем пулĕç. Вĕсене васкамасăр парăнтарма тăрăшăр. Эрнен иккĕмĕш çуррине вăхăта çемьепе пĕрле ирттерĕр: тăванăрсем патне хăнана кайса килĕр, паркра уçăлса çӳрĕр...



**Арăслан.** Бизнеспа аппаланакансем çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăвĕç. Урăх регионти партнерсемпе çыхăну тытакансем – уйрăмах. Шăмат кун ĕçлĕ тĕл пулăва хутшăнăр – унта тупăш кӳрекен килĕшӳ алă пусма май килĕ.



**Хĕр.** Ăнăçлă эрне. Чылай ĕçтешĕр сирĕн шухăшпа килĕшмест пулин те проекта ăнăçлă вĕçлеме, ун хыççăнах тепĕр ĕçе кӳлĕнме май килĕ. Калаçма ан хăракăр, ăсталăхăра туллин кăтартăр. Ĕç нумай пулнăран шăмат кун та килте ларăймастăр, анчах вăйран кайиччен тăрмашни сывлăха хавшатма пултарать.



**Тараса.** Япăх мар эрне! Аçăр-аннĕр, тусăрсем пулăшсан ĕçре те çитĕнӳ тăваятăр. Çак тапхăрта мăшăрланма шут тытнисен пăшăрханма кирлĕ мар: çемье сирĕп те телейлĕ пулĕ. Шăмат кун туй тăвакансемшĕн, хĕр çураçакансемшĕн ĕмĕрлĕхех асра юлĕ.



**Скорпион.** Кил-тĕрĕшре аппаланатăр. Ахăртнех, çемьере кĕçех йыш хушăнассипе те çыхăннă ку. Ытлари кунпа кĕçнерни кун аçăр-аннĕрĕ, пуçлăхăрпа ан тавлашăр, эрне кун çывăх çыннăрсене кĕрекене пухăр, пĕчĕк парнепе те пулин савăнтарăр. Тĕл пулăва йыхравласан та ан кайăр – унта нимĕнле çĕнĕлĕх те пулмĕ.



**Ухăçă.** Пачах та вĕренес килмест-и? Пур пĕрех ан кахалланăр, кĕнеке хыççăн кĕнеке шĕкĕлчĕр, пухнă ăс каярахпа питĕ кирлĕ пулĕ. Вăй-хăват тапса тăмасть-и? Пĕр-пĕр секцие çырăнăр, спортпа туслашни кăмăлăра çĕклĕ. Савнийĕр /мăшăрăр/ пулăшу ыйтать-и?



**Ту качаки.** Суту-илӳпе аппаланакансемшĕн ăнăçлă тапхăр. Çурт-йĕр туянас шухăш пур-и? Ытлари кун хаçат-журнал уçса пăхăр, унти пĕлтерӳсене тимлĕ сăнăр. Кирлĕ пулсан шанчăклă юлташăрсем алă параççех. Эрне кунпа шăмат кун юридици хучĕсемпе аппаланăр, вырсарни кун килтен ан тухăр – шуçса ӳкес хăрушлăх пур.



**Шыв тăкан.** Эрне пуçламăшĕнче çанă таварсах ĕçлемелле пулĕ: çĕнĕ проекта пурнăçлама тытăнатăр, юлташăрсене пулăшатăр... Укçа-тенкĕпе, документсемпе, транспортпа çыхăннă йывăрлăхсем сиксе тухма пултарĕç.



**Пулăсем.** Пысăк укçа ĕçлесе илес тесех ултавçăсен аллине çакланма пултаратăр. Иккĕленӳллĕ сĕнӳсене тӳрех ан йышăнăр – тĕплĕ шухăшлăр, мăшăрăрпа /савниĕрпе/ канашлăр. Ку пăтăрмах чунран пăшăрханасси патне илсе çитерме пултарĕ. Саккуна пăхăнăр, çивĕч ыйтусене васкамасăр татса парăр.



## Çанталăк

| | | кăнтăрла | | çĕрле |
|---|---|---|---|---|
| 22.02 | - | 10 | - | 12 |
| 23.02 | - | 10 | - | 9 |
| 24.02 | - | 5 | - | 6 |
| 25.02 | - | 3 | - | 8 |
| 26.02 | - | 4 | - | 11 |
| 27.02 | - | 5 | - | 10 |
| 28.02 | - | 4 | - | 10 |

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353, "Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515, "Сывлăх" – 11524, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /директор-тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор Ю.С.МИХАЙЛОВ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор-тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ,
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ, hypar2008@rambler.ru
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай
/8-835-38/2-18-02, 2-11-95–Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ,13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 8843. Заказ 634.
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пусне.